Ц. Б. им. Горького
0 Пӗр №-рӗ 10 пус. 19-мӗш ҫул тухать.

1937 октябӗр 9 шаматкун 232 (4744)-мӗш №

Чӑваш Коммунӗ

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ

Редакципе кантур адресӗ:
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
Телефонсем: Дежурнӑйӑн 6—23
Редактӑрӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88

Чукунҫула пӗтӗм республикӑн тумала

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строительствинчи стахановла вунӑкунлӑхӑн малтанхи кунӗсем—ӗҫ хӗрӳленрех, хастарлӑнрах пулса пыма тытӑннине кӑтартаҫҫӗ. Ӗҫ вӑйӗ кунсеренех хутшӑнса пырать, ӗҫре ҫӗнӗ ударниксем, стахановецӑсем тата пример кӑтартса ӗҫлекен бригадӑсемпе звеносем ӳсеҫҫӗ. Ҫӗрпӳ районӗнчи „Коммунар" колхозран килнӗ П. Васильӗвӑ бригади вунӑкунлӑхӑн пӗррепмӗш кунӗнчех ӗҫ нормине 125 процент тултарчӗ, Васильӗв бригади те нормӑна 132 процент тултарса ӗҫлеме тытӑнчӗ, Крайнӗв каменщик нормӑна 110 проц. тултарать. Уйрӑмӑнах пирӗн ҫамрӑксем строительствӑра хӑйсен пултаруллӑхӗпе хастарлӑхне кӑтартаҫҫӗ. Рельсӑсем хывнӑ ҫӗрте ӗҫлекен Тарасӑв комсомолӗс бригади хӑйӗн ӗҫ нормине 148 проц. тултарать. Кун пек тӗслӗхсем татах та нумай илсе кӑтартма пулать. Шӑнкӑртам районӗнчен килнӗ Шакурӑв бригади, виҫҫӗмӗш участкӑра ӗҫлекен Симӑнӑв бригади, Скробӑвпа Волкӑв бригадисем т. ыт. те паха тӗслӗхсемпе ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем чӑваш халӑхӗн пысӑк ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртессишӗн пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлеҫҫӗ, чӑваш халӑхӗн мухтавлӑхне, чысне ҫӳле ҫӗклессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Анчах пайанхи куна строительствӑ ӗҫӗ ҫаплах пачах ҫителӗксӗр пырать. Строительствӑри командлӑ состав халиччен те стахановла вунӑкунлӑхӑн организатӑрӗ пулса ӗҫлеймест, ӗҫе организацилеме пӗлмест. Ку ӗнтӗ командлӑ состав хӑйӗн тӗп задачине пайанхи куна ҫитех ӑнланса илменнинӗ, йе ӑнланасшӑн пулманнине кӑтартать. Пуринчен ытла линии хывнӑ ҫӗрте, ҫӗр чавса купаланӑ ҫӗрте ӗҫсем начар. Строительствӑра ӗҫ вӑйӗ тӳсме ҫук вӑйлӑн йухӑнса тӑрать: пинӗпе килсе тӑрать, пинӗпе тухса кайать. Комсостав ӗҫ вӑйӗсене ҫирӗплетсе хӑварас тӗлӗшпе пачах ӗҫлемест. Ҫакӑ ӗнтӗ—строительствӑри тӗп ҫитменлӗх, ҫакӑ ӗнтӗ строительствӑ тытӑмӗ хӑйӗн, сӑмси ҫинче ларакан тӑшмансемпе вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсене пӗтерме тивӗҫлипе тытӑнманнин резулътачӗ.

Ҫӗр чавса купалас ӗҫе начар йӗркелени линии хывас ӗҫе тытса тӑрать. Чылай районсемпе колхозсем строительствӑна ӗҫ вӑйӗ парассине хакламаҫҫӗ. Октябӗрӗн 3-мӗшӗнче строительствӑра 3173 ҫын, 1148 лаша ӗҫленӗ, октябӗрӗн 7-мӗшӗнче 4872 ҫын, 1576 лаша ӗҫлерӗҫ. Ҫак ӳсӗм нумайтарах Ишлей, Тутаркас районӗсем ӗҫе вӑйлатнипе пулнӑ. Йулашки виҫӗ кун хушшинче Ишлей районӗ строительствӑна 821 ҫын, 173 лаша ӗҫлеме йачӗ. Елӗк, Йӗпрӗҫ, Канаш, Турхан, Тӑвай районӗсем строительствӑна ӗҫ вӑйӗ парас тӗлӗшпе тӳсме ҫук начар ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Вӑл районсенчен ӗҫ вӑйӗ ҫӗнӗрен килсе хутшӑнса пырас выранне, чакса пырать. Елӗк районӗнчен килнӗ колхозниксем строительствӑра октябӗрӗн 3-мӗшӗнче 271 ҫын 93 лаша ӗҫленӗ, октябӗрӗн 5-мӗшӗнче 151 ҫын, 49 лаша кӑна тӑрса йулнӑ. Вӑрмар тата Тӑвай районӗсенчен пӗтӗмпе те строительствӑра 31-шер ҫын кӑна ӗҫлет. Ҫак районсенчи руководительсем чукунҫул строительствине ку тарана ҫитиех хаклама вӗренсе ҫитеймеҫҫӗ. Парти тата совет работникӗсен халех ҫакна ӑнланса илмеле: ҫав тери йапӑх ӗҫленешен чӑваш халӑхӗ вӗсене ҫирӗп ответ умне тӑратма пултарать.

Чукунҫул линине 6 километр тӑршшӗ хывса виҫ-тӑватӑ кун кайарахах 96-мӗш километр патне ҫитнӗ. Дашков прораб сӑтӑрла ӗҫлесе пынине пула, ҫак тӗлте линии хывӑсси чарӑнса тӑчӗ. Дашков прораб плансем ҫукки тата ӗҫ вӑйӗ ҫителӗксӗрри ҫине йӑвантарса, 95—96 мӗш километрта трубасем ҫине тӑпра купалас ӗҫе октябӗрӗн 7-мӗшӗччченех тытса тӑнӑ. Ӗҫ вӑйӗ пулнӑ, плансем те пулнӑ, анчах кунта ӗҫлекен коммунистсен, комсомолӗссен тимлӗхӗ ҫитеймен, вӗсем Дашков ӗҫре чӑрмантарса пынине халиччецех ӑнланса илесшӗн мар. Дашков тӑшмалла шухӑшсем калавӑ фактсем пӗрре кӑна мар пулнӑ. Дашков колхозниксем ҫине улпутла пӑхни ҫинчен сахал мар сигналсем пулнӑ, Дашков линии хывассине чарса тӑрать,—тата мӗнӗн кирлӗ-ши ӗнтӗ чукунҫул строительствинчи парти организацин руководителӗсене ҫак сӑтӑрла ӗҫлекен Дашков ҫине ҫавӑрӑнтарса пӑхтӑрас пулсан? Кунта йӑвашчунлӑха тымарӗпех кӑкласа ывӑтма кирли тухса тӑрать, чукунҫул строительствин руководителӗсене тимсӗрлӗх сиенлӗхӗ ҫинчен тепӗр хут асӑнтарса хӑвармала пулать.

Ҫитменлӗхсем татах та нумай. Механизмсемпе начар усӑ кураҫҫӗ. Скребенков шофер ҫентябӗрӗн 30-мӗшӗнче икӗ автомашинӑна ҫӗмӗрсе стройран кӑларнӑ. Моторис Левчук „ЛК" екскаватӑра ватнӑ. Чылай чухне ҫунтармали йапаласем ҫитмеҫҫӗ, йе прорабсем ӗҫе йӗркелеме пӗлмен пирки екскаватӑрсем, трактӑрсем тата автомашинӑсем вӑхӑта ӗҫсӗр иртереҫҫӗ. Тимӗрҫӗсен кӑмрӑк ҫук, тимӗр ҫук, строительствӑри рабочисем хушшинчи дисциплинӑ ҫителӗклӗ вырӑнта тӑмасть, культурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе тивӗҫлӗ вырӑна лартайман. Строительствӑ начальникӗ Вавилкин, партком ҫекретарӗ Карпӑв йулташсем конкретлӑ йертсе пырассине кирлӗ пек вырӑна ҫӗклеймен.

Строительствӑра ӗҫ вӑйӗ ҫителӗксӗрри пайанхи кунччченех пырать. Районсенчи организацисем, йалсовечӗсем, колхоз правленисем колхозниксене чукунҫул строительствине ӗҫлеме мобилизацилес тӗлӗшпе культурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе питех те начар организациленӗ. Потребителле кооперацисем куллен кирлӗ таварсене кӳрсе килсе, чукунҫул строительствинче ӗҫлекенсем хушшинче сутассине халӗ те йӗркелесе ҫитереймеҫҫӗ.

Ҫак ҫитменлӗхсене пайанах пӗтермеле. Чукунҫул строительствинчи стахановла вунӑкунлӑха Октябӗр уйавӗ тӗлне Шупашкара пӗррепмӗш пойӗс килмеле туса организацилемеле. Парти, комсомол, совет тата культурӑпа хуҫалӑхла организацисен пӗтӗм вӑйа кӳлсе ӗҫлемеле, колхозниксен активлӑхне тата хастарлӑхне ҫӗклесе пымала.

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗ стахановла вунӑкунлӑха октябӗрӗн 15-мӗшне ҫити тӑсма йышанчӗ. Ҫак халӗ пыракан вунӑкунлӑхӑн тӗп задачи—стритӗлствӑри ӗҫ вӑйне чукунҫул хывса пӗтеричченех ӗҫлеме ҫирӗплетсе хӑварасси пулмалла. Строительствӑри, ҫавӑн пекех районсемпе колхозсенчи парти, комсомол, профсойуз тата совет организацисен ҫав задача пурнӑҫа кӗртессишӗн политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе сарса йарса, чӑннипех большевикла ӗҫлесе пымала.

Чӑваш халӑхӗ ҫулйӗр тӑвас тӗлӗшпе пӗрре кӑна мар лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗ. Пирӗн йака та тӑса ҫулсене пӗтӗм Совет Сойузне пӗлсе тӑрать. Епӗр хамӑр кӑкӑр ҫинче Ленин орденне ҫӗклесе ҫӳретпӗр. Ҫак хисеплӗхе, ҫак мухтавлӑха тата чыса чӑваш халӑхӗ чукунҫул тӑвас ӗҫре те кӑтартӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: ИЗОГИЗ Аслӑ пролетарилӗ революцин 20 ҫулхи уйавӗ тӗлне кӑларнӑ плакат (В. А. Стенберг художник хатӗрленӗ).

А. Базилевич фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Леваневски самолётне шырама

„Н—170" самолётӑн чаплӑ вӗҫевӗ

Мускав—Ҫурҫӗр Америкӑ вӗҫевсене иртерекен Правительствӑ Комиссийӗ пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ. Пӗлтерӳре Шевельов йулташ експедицин флагман карапӗ Леваневски йулташ самолётне шырама центрти польар бассейнине чаплӑ вӗҫев туни ҫинчен каланӑ.

Вӗҫев октябӗрӗн ҫиччӗмӗшӗнче пулнӑ. Вӗҫевре експедици начальникӗ Совет Сойузӗн Геройӗ Шевельов йулташ, „Н-170" самолётӑн командирӗ Совет Сойузӗн Геройӗ Водопйанӑв йулташ, штурман Совет Сойузӗн Геройӗ Спирин йулташ тата ыттисем те пулнӑ.

Самолёт Рудольф утравӗнчи аеродром ҫинчен ҫӗрле 3 сехет те 21 минутра вӗҫсе хӑпарнӑ. Вӗҫсе хӑпарсан пилӗк сехетрен самолёт польус патне вӗҫсе ҫитнӗ. Унта пӗлӗтсӗр ҫанталӑк тӑнӑ. Вара самолёт Леваневски екипажне, вӑл анса ларнӑ тесе шутлакан вырӑнта, шырама пуҫланӑ. Водопйанӑв йулташ польус урлӑ вӗҫсе каҫнӑ та Америкӑ йеннеле широтан 88 градус та 30 минутне вӗҫсе ҫитнӗ. Малала шырама тӗтре чӑрмантарнӑ. Самолётӑн кайала таврӑнмала килнӗ. 13 сехет те 10 минутра Водопйанӑв йулташ Рудольф утравӗ ҫине чиперех анса ларнӑ.

Правительствӑ Комиссийӗ ҫакна палӑртать: „Н-170" самолётӑн чаплӑ вӗҫевӗ — польар ҫӗрӗ пулас умӗн тӗттӗмленнӗ вӑхӑтра польуса историре пирвайхи хут вӗҫни пулса тӑрать. Халь ӗнтӗ ҫакӑ паллӑ — совет льотчикӗсем ҫулталлӑкӑн ҫакӑн пек йавӑр вӑхӑтӗнче те польус ҫинче вӗҫме пултараҫҫӗ.

(ТАСС).

Чухновски йулташ отрйачӗ Нарйан-Мара вӗҫсе кайать

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче каҫхине, вӗҫев отрйачӗн командирӗ Чухновски йулташ Архангӗлскран О. Й. Шмидт йулташа ҫапла пӗлтернӗ: експедицине кайакансем пурте сывӑ та ӗҫчен, пурте малала — ҫурҫӗреле хӑвӑртрах вӗҫсе кайассишӗн ҫунаҫҫӗ. Отрйадӑн самолёчӗсем вӗҫсе тухма хатӗр тӑраҫҫӗ. Ҫанталӑк мӗнле пуласси ҫине сӑнани, октябӗрӗн 8-мӗшӗнче Архангӗлскран вӗҫсе тухма шанчӑк пурать.

О. Й. Шмидт йулташ кӑтартса панӑ тӑрӑх, Чухновски йулташ отрйачӗн малала вӗҫмелли маршрутне улӑштарнӑ. Малтан отрйад самолочӗсен Амдермӑра анса ларма, тесе шутланӑ. Халь ӗнтӗ вӗсем тӳрех Нарйан-Мара вӗҫсе кайаҫҫӗ.

(ТАСС).

Грациански йулташӑн вӗҫевӗ

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче О. Й. Шмидт Фербенксран (Альаскӑ) радиограммӑ илнӗ. Радиограммӑра Грациански йулташ октябӗрӗн 5-мӗшӗнче „Н-207" амфиби ҫинче ҫӗнӗ вӗҫев туни ҫинчен пӗлтернӗ.

Грациански йулташ Барроу сӑмсахӗ ҫинчен вӗҫсе тухнӑ та ҫурҫӗр широтин 75 градус та 30 минутне тата хӗвеланӑҫ долготин 148 градус та 30 минутне ҫитнӗ. Вара вӑл Барроуна таврӑннӑ. Малала — ҫурҫӗреле вӗҫсе кайма тӗтре чӑрмантарнӑ. Грациански йулташ ҫанталӑк сивӗтсен ҫурҫӗреле тата инҫерех вӗҫсе кайма май пуласса шанса тӑрать.

(ТАСС).

Арктикӑра хӗл каҫакансене улӑштарни

Пӑрлӑ тинӗссен ҫыранӗсенче тата утравсем ҫинче вырнаҫнӑ польар станцийӗсене хӗл каҫакансен ҫӗнӗ сменисем вырӑна ҫитсех тӑраҫҫӗ. Вӗсен Арктикӑра пысӑк та хаклӑ ӗҫсем туса пымала килет.

Архангельскран тата Владивостокран тухса кайнӑ пӑрахутсем ҫинче польар станцийӗсенче хӗл каҫакансем 500 ҫын кайнӑ. Совет Арктикин Хӗвелтухӑҫ ҫектӑрӗнче хӗл каҫакансене улӑштарса ҫитерне ӗнтӗ. Уеллен сӑмсахӗнче, Шмидт сӑмсахӗнче, Врангӗл утравӗ ҫинче, Анадырте хӗл каҫма халь пырса ҫитнисем кайсен ӗҫӗсене часах хӑнӑхса ҫитнӗ. Вӗсем тинӗссем ҫинче пӑр мӗнле куҫса ҫӳренине, тинӗсри шыв йуххисене, ҫанталӑка, ҫурҫӗр ҫуттине санаса тараҫҫӗ.

Польар станцийӗсенче хӗл каҫнисем, Арктикӑна тӗпчесе вӗренес тата алла илес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тунӑ, час-часах пурнӑҫа шеллемесӗр, геройла ӗҫленӗ хыҫҫӑн, Мускава, Ленинграда тата ытти хуласене таврӑнаҫҫӗ. Оловйаннӑй сӑмсахӗнче, Таймыр устинче тата Уйединени утравӗ ҫинче хӗл каҫнӑ польарниксем килнӗ ӗнтӗ.

Польарниксем нумайӗшӗ канма курортсене кайаҫҫӗ.

(ТАСС).

Хӗрлӗ йалавлӑ ансамбль Мускава таврӑннӑ

Октябӗрӗн 6-мӗшӗнче художествӑлӑ руководител професор-орденоносцӑ ССР Сойузӗн халӑх артисӗ А. В. Александрӑв йертсе пыракан Хӗрлӗ Ҫар йуррисемпе ташшисен хӗрлӗ йалавлӑ ансамблӗ урӑхҫӗршывран Мускава таврӑннӑ.

Халӑхпа тулнӑ Белоруҫҫи вакзалӗн площадӗнче митинг пулса иртнӗ.

Ансамблӗн художествӑлӑ руководителӗ професор-орденоносцӑ ССР Сойузӗн халӑх артисӗ Александрӑв йулташ митингра сӑмах тухса каланӑ.

— Тӑван совет ҫӗрне, тӑван Мускава таврӑнса,—тенӗ Александрӑв йулташ,—епӗр хамӑрӑн малтанхи саламлӑ сӑмахсене, хамӑрӑн тӑван ҫулпуҫне, учителе тата туса Иосиф Виссарионович Сталина, Совет правительствине тата унӑн пуҫлӑхне Молотӑв йулташа, йуратнӑ Оборонӑ Халӑх Комиссарне Совет Сойузӗн маршалне Ворошилӑв йулташа паратпӑр. Епӗр хамӑр социализмлӑ тӑван ҫӗршывӑн чиккин тулашӗнче совет искусствин йалавне хисеплӗн ҫӗклесе тухнипе телейлӗ.

(ТАСС).

Донбас шахтисенчи стахановецӑсемпе ударниксен сльочӗ

Л. М. Каганович йулташ сӑмах тухса каланӑ

Донбасри чи лайӑх ҫынсем—пӗтӗмпе 14.500 ҫынна йахӑн—Донбас шахтисенчи стахановецӑсемпе ударниксен сльотне пухӑннӑ. Сльот виҫӗ хулара—Сталинора, Горлов кӑрататаМакейӗвкӑра пулса иртет.

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче Сталинори сльотра Йӑвӑр промышленнӑҫ халӑх комиссарӗ Л. М. Каганович йулташ сӑмах тухса каланӑ.

Сльота пынӑ делегатсем—Сталин пӑхса ӳстернӗ стахановецӑсем Л. М. Каганович йулташ трибунӑ ҫине тухнине тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ. Л. М. Каганович йулташӑн кӑмрӑк тупассишӗн кӗрешмели татӑклӑ план кӑтартса паракан усӑмлӑ сӑмахсене нумай хутчен тӑвӑллӑ оваци туса калама чараҫҫӗ.

Каганович йулташ сӑмахне Сталиноран радио тӑрӑх Горловкӑна тата Макеевкӑна панӑ.

Халӑхсен ҫулпуҫӗ—Сталин йулташ патне йамали саламлӑ телеграммӑна сльот калама ҫук пысӑк хаваслӑхпа йышӑннӑ. Вырӑнсенчен: „Сывӑ пултӑр пирӗн тӑван, йуратнӑ Сталин йулташ!", „Аслӑ Сталина горнаксенчен хӗрӳлӗ салам!"—тесе саламланине хирӗҫ зал тӑвӑллӑн „урра" кӑшкӑрса тата чылайччен хӗрӳлӗ оваци туса ответленӗ.

Сльот Совет Сойузӗнчи мӗн пур металлургсемпе горнаксем пани чӗнӳ йама йышӑннӑ. Кӑмрӑклӑ Донбасӑн малта пыракан ҫыннисем ҫӗршыври мӗн пур горнаксемпе металлургсене социализмлӑ ӑмӑртува хутшӑнса, Октябӗрти Социализмла Аслӑ революци 20 ҫул тултарнӑ уйава кӑмрӑкпа металлшӑн кӗрешнӗ фронтра ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемпе кӗтсе илме чӗнеҫҫӗ.

* * *

Донбасри сльотӑн мӗн пур делегачӗсене Йӑвӑр промышленнӑҫ халӑх комиссариачӗ хаклӑ парнесемпе премиленӗ. (ТАСС).

Сӑнчӑрлӑ тракторсене нумайрах туса кӑларма пуҫлаҫҫӗ

ХАРЙКӐВ, октябӗрӗн 6-мӗш. (ТАСС). Харйкӑври Орджоникидзе йачӗпе тӑракан трактӑр савӑчӗн нумай пинлӗ коллективӗ сӑнчӑрлӑ трактор туса кӑларас ҫӗнӗ йӑвӑр производствӑна хӑвӑртрах вӗренсе ҫитессишӗн кӗрешет. Пысӑк конвейӗрӗн ӗҫӗ йеррипенех аванланса пырать. Октябӗрӗн 3-мӗшӗнче конвейӗртан 6 машинӑ, 4-мӗшӗнче 7 машинӑ тухнӑ. Сӑнчӑрлӑ тракторсене тума пуҫланӑранпа (ҫентябӗрӗн 17-мӗшӗнчен октябӗрӗн 4-мӗшне ҫитиччен) 62 хурҫӑ лаша туса кӑларнӑ. Кашни машинӑнах тӗплӗ тӗрӗслесе пӑхаҫҫӗ.

Чи лайӑх стахановецӑсем — слесӑрсем, токӑрсем, литейщиксем, тимрӗҫсем тата ытти те Аслӑ Социализмлӑ революци 20 ҫул тултарнӑ йатпа пыракан стахановла уйӑхлӑха хутшӑнса, ҫӗнӗ производствӑна вӗренсе ҫитессишӗн большевикла кӗрешсе пример кӑтартаҫҫӗ. Вуншар бригадӑсем нормӑна икӗ хут тата ытларах та тултараҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах лайӑх продукци параҫҫӗ.

Чукунҫул строительствинчи стахановла вунӑкунлӑх

Ҫиччӗмӗш кун

Чукунҫул строительствинчи стахановла вунӑкунлӑх пуҫланнӑранпа 7 кун иртрӗ ӗнтӗ. Колхозниксен строительствӑра ӗҫлес хастарлӑх пысӑк. Стахановла вунӑкунлӑх пуҫланнӑранпа кашни куллен ҫынсем хутшӑнсах параҫҫӗ.

Уйрӑмӑнах Хӗрлӗ Чутай районӗ чукунҫул строительствинче чи малти вырӑна тухнӑ. Вӑл хӑйӗн планне 120 процент тултарнӑ, вӑл районран килнӗ колхозниксем халӗ те ӗҫлеҫҫӗ.

Куславкка районӗн план тӑрӑх 15 пин кубла метр ҫӗр чавса купаламала пулнӑ пулсан, 10482 кубла метр тултарнӑ.

Уйрӑм колхозсене илсен, Хирлӗпуҫ йалсоветӗнчи „Заветы Ильича" (Елӗк р.), Туппай Ӗсмӗлӗнчи „Красная Чувашия" (Сӗнтӗрвӑрри р.), „Пӗрлешӳ" (Вӑрнар р.), „Ҫӗнӗ ҫул" колхоз (Ҫӗрпӳ р.), Нискассинчи „Ударник" (Тутаркас р.) колхозсем хӑйсем ҫине илнӗ обйазательствӑна ытлашшипех тултарнӑ. Ҫак асӑннӑ колхозсенче чукунҫул строительствинче ӗҫленӗ ҫӗрте пӗрлешӳлӗ апатланассине, культурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе лайӑх организациленӗ.

86-мӗш километӑрта трубасен фундаментне хывакансен—бригади (бригадир Шиленникӑв) тата участкӑ начальникӗ Захарйонок ӗҫе лайӑх организациленипе, ӗҫре пулӑшса пынипе кулленхи ӗҫ нормине 227 процент тултарса пырать. Ҫавӑнпа та Захарйонок йертсе пынӑ участкӑ кулленхи нормӑна 100 процента йахӑн тултарса пырать. Ҫав хушӑрах 3-мӗш участкӑ (начальникӗ Дашков) ӗҫре ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫлесе пынипе строительствӑ ӗҫӗнче чӑрмантарса пырать. Вӑл хӑйӗн участкинче стахановла вунӑкунлӑха нимӗн хатӗрленмесӗр кӗтсе илнӗ. Строительствӑна пыракан ҫынсене тимӗр кӗреҫесем тата ытти кирлӗ йапаласене памасӑр тӑнӑ. Кулленхи ӗҫе учота илсе пымасть, стахановла йухӑм ҫинчен сӑмах та шарламан. Лашасемпе ӗҫлекенсене вальли урапасене сӗрмели таврашсем ҫук. Вӑл строительсене ӑшӑ кӑмӑлпа каласа ӑнлантарас вырӑнне, усал сӑмахсемпе кӑшкӑрса хӑратать.

Чукунҫул строительствинчи стахановла вунӑкунлӑха начар хутшӑнакан районсем сахал мар-ха. Районти пуҫлӑхсем кун ҫинчен аса та илмеҫҫӗ. Вӑрнар плана 11 проц. тултарнӑ, Тӑвай—10,5 проц., Шӑхасан—17 проц., Шӑнкӑртам—14,1 проц., Турхан—24 процент тата ытти районсем те ҫавнашкалах начар ӗҫлесе пыраҫҫӗ.

Испанири фронтсенче

Ҫурҫӗрти фронт

Испанин ҫурҫӗр йенче Леон провинцин кӑнтӑр пайӗнче ҫӗнӗрен хайаррӑн ҫапӑҫма пуҫланӑ. Испанире промышленнӑҫ йенчен чи вӑйлӑрах облаҫсенчен пӗри пулса тӑракан Астурине туртса илме хӑтланакан фашисла пӑлхавҫӑсемпе интервентсене хирӗҫ республикӑ ҫарӗсем питӗ хыта ҫапӑҫаҫҫӗ.

Октябӗрӗн 6-мӗшӗнче фашиссем Тарна йатлӑ сӑрт тӳрчӗн тата Лулуи текен ҫӳлӗ вырӑн районӗнче питӗ нумай атакӑсем тунӑ. Республиканцӑсем фашиссен атакисене ӑнаҫлӑн сирсе йанӑ, йӑвӑр ҫухатусем тутартгарнӑ. Чылай атакӑсем тунӑ хыҫҫӑн ҫеҫ Босанес йалӗн районӗнче фашиссем пӗр сӑртлӑ ҫӳлӗ вырӑна йышӑнма пултарнӑ.

Хӗвелтухӑҫри фронт

Хӗвелтухӑҫри (Арагони) фронтра (Тури Арагонире) октябӗрӗн 6-мӗшӗнче республикӑ ҫарӗсем 1.403 текен сӑртлӑ ҫӳлӗ вырӑн тата вӑл районра икӗ йал йышӑннӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та ҫук. (ТАСС).

Чехословаки посланникӗ Зденек Фирлингер господин Мускава ҫитнӗ

Чехословакин ССР Сойузӗнчи ҫӗнӗрен лартнӑ чрезвычайлӑ посланникӗ тата полномочнӑй министрӗ Зденек Фирлингер господин октябӗрӗн 5-мӗшӗнче Мускава ҫитнӗ.

Белоруҫҫи вакзалӗнче Фирлингер господина урахҫӗршыв ӗҫӗсен Халӑх Комиссариачӗн протокол пайӗн пуҫлӑхӗ вырӑнӗнче вӑхӑтлӑха ӗҫлекен С. И. Волк йулташ тата Чехословакин Мускаври миҫҫин составӗ кӗтсе илнӗ.

Ҫӑмӑл гидросамолётпа ниҫта анса лармасӑр инҫене вӗҫни

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче льотчик-испытател Кржижевски йулташ „Гидро-1" йатлӑ ҫӑмӑл спорт гидросамолётпа ниҫта анса лармасӑр инҫене вӗҫнӗ. Одессӑран вӗҫсе ҫӗкленнӗ те, тӑватӑ сехет иртнӗ хыҫҫӑн вӑл Керч проливне чиперех анса ларнӑ, 483 километр хушӑна ниҫта анса лармасӑр вӗҫсе тухнӑ ҫӑмӑл гидросамолётсен ҫавӑн пек категорипе инҫене вӗҫсе тухнӑ рекорд Кинг йатлӑ Америкӑ пилочӗн аллинче пулнӑ. Вӑл 1935 ҫулхи ийунӗн 25-мӗшӗнче „Аэронка" гидросамолётпа ниҫта анса лармасӑр 353 километр та 988 метр вӗҫнӗ.

(ТАСС).

Шчорс пӳлӗмӗ

ЧЕРНИГӐВ, ҫентябӗрӗн 5-мӗш. (ТАСС). Чернигӑври истори музейӗ йубилей кунӗсем тӗлне граждӑн вӑрҫин геройӗн Николай Александрович Шчорс пӳлӗмне уҫать.

Пӳлӗме пухнӑ интереслӗ документсем Шчорс пурнӑҫӗпе ӗҫӗнчи уйрӑм тапхӑрсене ҫутатса параҫҫӗ. Вӑл документсем хушшинче—Ленин Шчорс патне йанӑ телеграммӑ, алҫырӑвӗсем, хӑйӗн библиотеки, унӑн походра илсе ҫӳренӗ кроватӗ, ҫырусем, фотографисем тата ыттисем те пур. Кунтах тата Шчорс дивизийӗ тунӑ паттӑр походсен картти пур, ӑна музей туса хатӗрленӗ.

ÇИРĔМ ÇУЛ КАЙАРАХ БОЉШЕВИКСЕМ АСЛĂ ШТУРМА МĔНЛЕ ХАТĔРЛЕННĔ

Ленинпа Сталин 1917 çулти октябĕр умĕн çырнă историлĕ документсем

Н. Ленин

МАРКСИСĂМ ТАТА ВОССТАНИ

Р.С.-Д.Р.П. Тĕп Комитетне йанă çыру

Пуçпулса тăракан „социалисăмлă“ партисем марксисăма чи киревсĕр пăснисен тата чи анлăрах та-и тен сарăлнă пăсăксен шутне,—восстани хатĕрлесси имĕш, восстанийе искусствă вырăнне хурса шутлани „бланкисăм“ пулат̆, тесе оппортунисла суйни кĕрет.

Оппортунисăм çулпуçĕ, Бернштейн, марксисăма бланкисăм хыççăн кайат̆ тесе айăпланипе хăйне чиссăр чапа кăларчĕ ĕнтĕ, кучуххеçхи оппортунистсем те бланкисăм çинчен кăшкăрса, Бернштейнăн ырхан „идейисене“ нимĕн чухлĕ те çĕнетмеççĕ тата „пуйанлатмаççĕ“.

Восстанийе искусствă вырăнне хурса шутланăшăн марксиссене бланкисăм хыççăн кайаççĕ тесе айăплама! Шăпах Маркс восстанийе искусствă тесе, восстанийе искусствă вырăнне хурса шутламала, пирвайхи çĕнтерӳве кĕрешсе илмеле те тăшман айтăраса ӳкнипе т. ыт. те т. ыт. те усă курса, ун çине наступлени тума чарăнмасăр, çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне каймала тесе, восстани пирки чи татăклăн, тĕп-тĕрĕс, тавлашма çук витĕр каланинчен, пĕр марксис та пăрăнас çук чухне чăнлăха çавăнтан килĕшӳсĕртерех пăсни пулма пултарат̆-ши.

Восстани, ăнăçлă пултăр тесе, вăрттăн кавар çине мар, парти çине мар, малта пыракан клас çине тайанмала. Ку пĕрремĕшĕнчен. Восстани халăхăн революцилĕ çĕкленӳвĕ çине тайанмала. Ку иккĕмĕшĕнчен. Восстани ӳссе пыракан революци историйĕнче халăхăн малта пыракан ĕречĕсен хастарлăхĕ чи пысăк чухнехи, тăшмансен ĕречĕсене тата революцин вăйсăр иккĕлле хăйусăр туссен ĕречĕсенче иккĕленӳ чи вăйлă чухнехи улшăну саманчĕ çине тайанмала. Ку виççĕмĕшĕнчен. Çакăн пек виçĕ услови илсе восстани çинчен ыйту лартнипе марксисăм бланкисăмран уйăрăлса тăрат̆ те ĕнтĕ.

Анчах çав условисем пур тăк, восстанийе искусствă вырăнне хурса шутлама килĕшменни вара марксисăма пăрахса тăшмана сутăнни тата революцийе пăрахса тăшмана сутăнни пулат̆.

Епĕр пурăнса ирттерекен тапхăра мĕншĕн шăпах çакăн пек тапхăр, восстанийе обйективлă событисен утăмĕ кун йĕркине лартнă тесе йышăнасси тата восстанийе искусствă вырăнне хурса шутласси партишĕн обйазательнă пулмала тапхăр, тесе йышăнма кирлине ĕнентерсе пама танлаштару метăчĕпе усă курни тата ийулĕн 3—4-мĕш кунĕсене çентябĕр кунĕсемпе танлаштарса пăхни пуринчен лайăхрах та пулĕ тен.

Чăнлăха хирĕç тăрса çылăха кĕмесĕр, ийулĕн 3—4-мĕшĕнче ыйтува çакăн пек лартма йуранă: влаçа илни тĕрĕсрех пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен тăшмансем пире влаçа илмесен те çав-çавах восстани тунă тесе айăплĕç те повстанцăсене çĕмĕрнĕ пек çĕмĕрсе тăкĕç. Анчах çавăнтан ун чухне влаçа илес майлă вывăд тума йураман, мĕншĕн тесен ун чухне восстани çĕнтермешкĕн обйективлă условисем пулман.

1) Революци авангарчĕ пулса тăракан клас пирĕн хыççăн пыман пулнă-ха.

Столицăсенчи рабочисемпе салтаксем хушшинче ытларахăш пирĕн йенче пулман-ха. Халĕ вăл Советсенче иккĕшĕнче те пур. Ийуљпе август историйĕ кăна, большевиксене „çĕмĕрсе тăкнă“ опытпа корниловщинă опычĕ, çав ытларахăша туса хучĕ.

2) Ун чухне пĕтĕм халăх революцилĕ çĕкленни пулман. Халĕ вăл корниловщинă хыççăн пур. Провинци тата нумай çĕрте Советсем влаçа илни çавă пуррине ĕнентерсе парат̆.

3) Пирĕн тăшмансемпе иккĕлле вак буржуази хушшинче ун чухне пĕтĕм политикă калăшпех пысăк иккеленӳсем пулман. Халĕ иккеленӳсем улăп пек пысăк: пирĕн тĕп тăшман, союзлă тата пĕтĕм тĕнчери империалисăм,—мĕншĕн тесен „союзниксем“ пĕтĕм тĕнчере империалисăм пуçумĕнче тăраççĕ,—çĕнтереччен вăрçмала-и йе Российа хирĕç сепаратлă мир тумала тесе иккеленсе ӳкрĕ. Пирĕн вакбуржуалă демократсем, халăх хушшинче ытларахăша куçкĕрет çухатса, тем пекех хытă иккеленсе ӳкрĕç, кадетсемпе блок тума, урăхла каласан, коалици тума отказ турĕç.

4) Çавăнпа ийулĕн 3—4-мĕшĕнче восстани туни йăнăш пулнă пулĕччĕ: епĕр влаçа вăй тĕлĕшĕнчен те, политикă тĕлĕшĕнчен те тытса тăрайман пулăттăмăр. Питĕр тапхăр-тапхăрĕпе пирĕн аллăра пулнă пулин те, вăй тĕлĕшпе влаçа тытса тăрайман пулăттăмăр, мĕншĕн тесен пирĕн рабочисемпе салтаксемех ун чухне Питĕре тытса тăрассишĕн çапăçма, вилме килĕшмен пулнă пулĕччĕç: çав тери „хайарланса çитни“, Керенскисене те, Церетели—Черновсене те çав тери хытă курайманни пулман, ес-ерсемпе меншевиксем пулăшнипе большевиксене хĕсĕрленĕ опытпа пирĕн çынсем пиçĕхмен пулнă-ха.

Политикă тĕлĕшĕнчен епĕр влаçа тытса тăрайман пулăттăмăр, мĕншĕн тесен армипе провинци, корниловщинăччен, Питĕр çине кайма пултарнă, кайнă та пулĕччĕç.

Халĕ картинă йăлтах урăхла.

Массăсене хавхалантарма пултаракан класăн, революци авангарчĕн, халăх авангарчĕн ытларахăшĕ пирĕн хыççăн пырат̆.

Халăхăн ытларахăшĕ пирĕн хыççăн пырат̆, мĕншĕн тесен Чернов тухса кайни хресченсем ес-ерсен блокĕнчен (ес-ерсенчен хăйсенчен те) çĕр илейрес сунмине кăтартса паракан пĕртен-пĕр мар та, анчах питĕ те усă, куçа курнан паллă пулат̆. Çакăнта вара революци пĕтĕм халăх революцийĕ пулса тăнин тупсăмĕ.

Пĕтĕм империалисăм та, меншевиксемпе ес-ерсен пĕтĕм блокĕ те калама çук хытă иккеленнĕ вăхăтра хăйĕн çулне çирĕп пĕлекен партин положенийĕ пирĕн майлă тăрат̆.

Епĕр чăн-чăнах çĕнтерĕпĕр, мĕншĕн тесен халăх шанчăка çухатасси патне çитесси питех те çывăх ĕнтĕ, епĕр вара,—пирĕн руководствă мĕне пĕлтернине „Корнилăв кунĕсенче“ пĕтĕм халăха кăтартса парса, унтан блокиссене компромис сĕнсе вĕсенчен хăйсĕм иккеленесси пачах та чарăнман условире отказ илсе,—пĕтĕм халăха шанчăксăрлăхран тухмали тĕрĕс çул паратпăр.

Компромис тума панă пирĕн сĕнӳве сивлемен-ха, „Демократилĕ Совешчани“ ăна йышăнма пултарат̆-ха, тесе шухăшлани пысăкран та пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. Компромис тума парти партисене сĕннĕ; ăна урăхла сĕнме пултарайман. Партисем ăна йышăнмарĕç. Демократилĕ Совешчани вăл совешчани кăна, урăх нимĕн те мар. Çакна манма йурамаст̆: унта революцилĕ халăхăн ытларахăшĕ, чи чухăн та тарăхса çитнĕ хресченсем çук. Çав совешчани халăх сахалтарахăшĕн совешчанийĕ,—çав куçа курнан чăнлăха манма йурамаст̆. Демократилĕ Совешчанийе парламент вырăнне хурса шутлани пирĕн йенчен пысăкран та пысăк йăнăш, пысăкран та пысăк парламентла кретинисăм пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен вăл хăйне парламент тата революцин суверенлă парламĕнчĕ тесе пĕлтерес пулсан та, вăл çав-çавах нимĕн те татса памаст̆: решени ун тулашĕнче, Питĕрпе Мускаври рабочисен кварталĕсенче пулат̆.

Восстани ăнăçлă пулма кирлĕ обйективлă условисем пирĕн умра пурте пур. Пирĕн умра—пирĕншĕн лайăх положени, восстанире епĕр çĕнтерни кăна халăха асаплантарса çитернĕ иккеленӳсене, çут тĕнчери çав чи асаплă йапалана, пĕтерсе хурĕ; восстанире епĕр çĕнтерни кăна революцийе хирĕç сепаратла мир туса выљассине аркатса тăкĕ, ăна уççăн тулинрех, тĕрĕсрех, çывăхрах мир, революцийе усăкӳрекен мир сĕннипе аркатса тăкĕ.

Пирĕн парти кăна, йулашкинчен, восстанире çĕнтерсе, Питĕре çăлма пултарат̆, мĕншĕн тесен, пирĕн мир тăвас сĕнӳве сивлесен тата епĕр вăхăтлăх мир те илеймесен, епĕр вара „оборонцăсем“ пулса тăрăпăр, епĕр вара вăрçăлă партисен пуçумне тăрăпăр, епĕр чи „вăрçăлă“ парти пулăпăр, епĕр вăрçа чăн-чăн революцилĕ туса пырăпăр. Епĕр капиталиссен мĕн пур тыррине тата мĕн пур аттисене туртса илĕпĕр. Епĕр вĕсем валљи çăкăр хыттипе хăварăпăр, вĕсене çăпата сыртарăпăр. Епĕр пĕтĕм тырра тата пĕтĕм атă-пушмака фронта парăпăр.

Епĕр ĕнтĕ Питĕре çăлса хăварăпăр вара.

Чăн-чăн революцилĕ вăрçăн ресурсисем, материаллисем те, ăспуçа кирлисем те, Российăра ытамласа илме çук пысăк-ха; 100-тен 99 шанчăк нимĕçсем пире сахалтан та вăхăтлăх мир парас майлă тăрат̆. А халĕ вăхăтлăх мир илни—пĕтĕм тĕнчене çĕнтерессине ĕнтĕ пĕлтерет.

* * *

Революцийе çăлма тата икĕ коалицири империалиссем Российăна „сепаратла“ пайлассинчен çăлма Питĕрпе Мускаври рабочисен восстанийĕ сăмах та çук кирлине тăна илсе, пирĕн пĕрремĕшĕнчен, Совешчанире хамăрăн политикăлă тактикăна ӳссе сарăлса пыракан восстани условийĕсемпе майлаштармала; пирĕн иккĕмĕшĕнчен, восстанийе искусствă вырăнне хурса шутлама кирли çинчен Маркс каланă шухăша епĕр сăмахпа кăна мар йышăннине ĕнентерсе памала.

Совешчанире пирĕн вăхăта чăсмасăр большевиксен фракцине пĕтĕçтермеле, ăна йышлăн тăвасшăн хыпса-çунмала мар, иккĕленекенсене иккĕленекенсен ĕретĕнчех хăварасран хăрамала мар: вĕсем унта революци ĕçĕшĕн, татăклăн та хăйсене шеллемесĕр кĕрешекенсен ĕретĕнче тăнинчен усăллăрах пулĕç.

Вăрăм сăмахсем вырăнсăррине, „сăмахсем“ пĕтĕмле вырăнсăррине, революцийе çăлма халех кĕрешӳве тытăнма кирлине, буржуазипе йăлтах çыхăну татма, пĕтĕм хальхи правительствăна йăлтах вырăнтан кăларма, Российăна „сепаратла“ пайлама хатĕрленекен Англипе Франци империалисĕсемпе йăлтах çыхăну татма сăмах та çук кирлине, пĕтĕм влаç халех революцилĕ пролетариат йертсе пыракан революцилĕ демократи аллине куçма кирлине чи сивĕччĕн палăртса, пирĕн большевиксен кĕске декларацине çырса хатĕрлемеле.

Пирĕн деклараци,—халăхсене мир, хресченсене çĕр памала, ирсĕр усламсене конфискацилемеле тата капиталиссем производствăна ирсĕр пăснине чарса лартмала текен программăлă пройектсене май,—çав хăйхи вывăда чи кĕскен те сивĕч çавăрса калани пулса тăмала.

Деклараци мĕн чухлĕ кĕскерех, вăл çавăн чухлĕ сивĕчрех пулĕ, çапла кирлĕ те. Унта тата тепĕр икĕ чи кирлĕ шухăша уççăн кăтартмала çеç: иккĕленӳве пула халăх тертленсе çитрĕ, ес-ерсемпе меншевиксен хăйусăрлăхĕ халăха асаплантарса пĕтерчĕ; епĕр çав партисемпе çыхăну тытма пуçпех пăрахатпăр, мĕншĕн тесен вĕсем революцийе пăрахса тăшмана сутăнчĕç.

Тепри ĕнтĕ: çийĕнчех аннексисĕр мир сĕнсе, союзлă империалиссемпе тата кирек мĕнле империалиссемпе те çийĕнчех çыхăнма пăрахса, епĕр халех йе вăхăтлăх мир илĕпĕр, йе пĕтĕм революцилĕ пролетариат оборонă йенне куçнине тата вăл йертсе пынипе революцилĕ демократи чăн-чăнах тĕрĕс, чăн-чăнах революцилĕ вăрçă вăрçассине туйанăпăр.

Çав декларацийе вуласа парса, калаçма мар, татса пама чĕнсе, резолюцисем çырма мар, кĕрешме чĕнсе, пирĕн пĕтĕм хамăр фракцийе заводсене тата казармăсене йамала: çавăнта унăн вырăнĕ, çавăнта пурнăç нерви, çавăнта революци çăлăнăçĕн çăлкуçĕ, çавăнта Демократилĕ Совешчанин двигателĕ.

Заводсемпе казармăсенче епĕр хĕрӳлĕ, вĕри сăмахсемпе хамăрăн программă çинчен ăнлантарса парса ыйтува çапла лартмала: йе Совешчани программăна йăлтах йышăнат̆, йе восстани. Вăтаççĕр çук. Кĕтме йурамаст̆. Революци пĕтет.

Ыйтува çапла лартса, фракцийе пĕтĕмпех заводсемпе казармăсенче тытса, епĕр восстани пуçармалли самантне тĕрĕс шутласа илĕпĕр.

Восстани çине марксисла пăхас, урăхла каласан, искусствă вырăнне хурса шутлас тесен, пирĕн çав хушăрах, пĕр минут çухатмасăр, повстанцă отрйачĕсен штабне организацилемеле, вăйсене валеççе тăратмала, шанчăклă полксене чи кирлĕ вырăнсене йамала, Александринкăна хупăрласа илмеле, Петропавлăвкăна тытса илмеле, генеральнĕ штаба тата правительствăна арĕслемеле, йункерсемпе тискер дивизийе хирĕç çакăн пек отрйадсем йамала: вĕсем вилме хатĕр пулччĕр та, анчах тăшман хула центрĕсем патне пырассине чарма пултарччăр; пирĕн хĕçпăшаллă рабочисене мобилизацилемеле, вĕсене йулашки харсăр çапăçува чĕнмеле, тӳрех телеграфпа телефона тытса илмеле, хамăрăн восстани штабне тĕп телефон станци çывăхне вырнаçтармала, телефон тăрăх ăна мĕн пур заводсемпе, мĕн пур полксемпе, хĕçпăшаллă кĕрешӳн мĕн пур пунктисемпе т. ыт. те çыхăнтармала.

Çакна пурне те тĕслĕхшĕн, паллах, пурăнса ирттерекен самантра восстанийе искусствă вырăнне хурса шутламасăр, марксисăма шанчăклă пулса йулма, революцийе шанчăклă пулса йулма май çуккине карттинлама çеç илсе кăтартнă.

1917 ç. сентябĕрĕн 26—27-мĕшĕнче çырнă.

И. Сталин

ИККĔМĔШ ХУМ

Вырăс революцин пĕрремĕш хумĕ царисăма хирĕç кĕрешес флагпа пуçланчĕ. Революцин тĕп вăйĕсем пулса ун чухне рабочисемпе салтаксем кĕрешнĕ. Анчах вĕсем пĕртен-пĕр вăй пулман. Вĕсемпе йунашар тата либераллă буржуйсем (кадетсем) тата Англипе Франци капиталисĕсем „кĕрешнĕ“, вĕсенчен пĕрремĕшсем царисăм Константинополь патне çул уçса пама пултарайман пирки унран хăпса кайнă, иккĕмĕшĕсем вара царисăм Германипе сепаратлă мир тума тăрăшнă пирки ăна пăрахнă.

Çапла майпа темĕнле вăрттăн коалици пулса тăнă, çав коалици хĕснипе царисăмăн сценă çинчен анмала пулнă. Çитменне царисăм персе аннă хыççăн тепĕр кунех çав вăрттăн коалици, Вăхăтлăх Правительствăпа Петроградри Советсем хушшинчи, кадетсемпе „революцилĕ демократи“ хушшинчи паллă договăр формине йышăнса, уçă коалици пулса тăчĕ.

Анчах çав вăйсем йăлтах тĕрлĕрен тĕллевсем лартса кĕрешнĕ. Кадетсем тата Англипе Франци капиталисĕсем массăсен революцилĕ хавхаланувĕпе империалисăмлă пысăк вăрçă вăрçас çĕрте усă курас тесе, пĕчĕк революци çеç туса пăхасшăн пулнă хушăра,—рабочисемпе салтаксем, йăлтах урăхла, помешчиксене çавăрса çапса тата империалисăмлă буржуазийе çавăрлăхласа вăрçă вăрçма пăрахас та тĕрĕс мир тăвас тесе, кивĕ режима тĕпренех çĕмĕрессишĕн тата аслă революци йăлтах çĕнтерессишĕн кĕрешнĕ.

Çав тĕп хирĕçӳ революци малала аталанса пырас никĕс пулса тăнă. Вăлах кадетсемпе тунă коалици тĕреклĕ мар пулассине малтанах палăртса хунă.

Влаç кризисĕ текеннисем пурте, йулашки, авăгустри, кризиса çитиех, çав хирĕçӳве палăртса тăраканнисем пулса тăраççĕ.

Кризиссем пынă хушăра ăнăçу кашнинчех империалисăмлă буржуази йенче пулнă пулсан, кризиса кашни „татмассеренех“ рабочисене тата салтаксене улталанă пулсан, коалици вара пĕр-пĕр формăпа çав-çавах тытăнса йулнă пулсан, ку ĕнтĕ империалисăмлă буржуази аван организациленнинчен тата унăн финанс хăватĕнчен кăна килмен, вак буржуазин иккеленчĕк çулти сийĕсемпе вĕсен есерсемпе меншевиксен партийĕсем, пирĕн пĕтĕмле вакбуржуалă çĕршыври вакбуржуалă йышлă массăсене халлĕхе хăйсен хыççăн илсе пыраканскерсем, влаçшăн кĕрешессине кадетсене усăтĕ татса парса, кашнинчех „баррикадăсен леш йенне“ тăнинчен те килнĕ.

Кадетсемпе тунă коалици ийуљ кунĕсенче, коалици членĕсем хăйсен хĕçпăшалне „большевикла“ рабочисемпе салтаксене хирĕç тытса, пĕрлĕхлĕ вирлĕ фронтпа тухнă вăхăтра, питрех вăйланса çитрĕ.

Ку тĕлĕшпе Мускаври совешчани ийуљ кунĕсен йанăравĕ çеç пулса тăнă, çитменне большевиксене канашлува кĕртменни „тӳрĕ коалицийе“ çĕршывăн „чĕрĕ вăйĕсемпе“ çирĕплетме кирлĕ залог пулса тăмала пулнă.

Большевиксене пĕччене хăварассине кадетсемпе тунă коалици тĕреклĕхĕшĕн кирлĕ услови вырăнне хурса шутланă.

Çапла пулнă ĕç Корнилăв восстанийĕччен.

Корнилăв выступленийĕ хыççăн картинă улшăнат̆.

Кадетсемпе тунă союз большевиксене хирĕç... кăна мар, пĕтĕм вырăс революцине хирĕç, революци çĕнтерӳвĕсен пĕтĕм пурнăçне хирĕç Корнилăвсемпе тата Калединсемпе тунă союз пулса кайас хăрушлăх Мускаври совешчанирех ĕнтĕ уççăн паллă пулса тăнă. Мускаври совешчанийе бойкот туни тата Мускаври рабочисен забастовки-протесĕ, контрреволюцилĕ пухă çинчи маскăна сĕвсе пăрахнăскерсем тата вăрттăн кавар тăвакансен планне аркатса пăрахнăскерсем, ун чухне хăйхи хăрушлăха хирĕç асăрхаттарни кăна мар, хатĕр тăма чĕнни те пулса тăнă. Пурте пĕлеççĕ, чĕнсе калани усăсăр пулмарĕ: чылай хуласем çавăнтах забастовкă-протеспа ответлерĕç.

Ку вăл çитес самана çинчен хайарран пĕлтерни пулнă.

Корнилăв восстанийĕ тулса çитнĕ революцилĕ çилĕ валљи клапан уçрĕ çеç, çыхса лартнă пулнă революцийе вăл салтса йарса, ăна хӳтерсе малала тĕртрĕ.

Кунта ĕнтĕ, контр-революцилĕ вăйсемпе тытăçса çапăçнă вутра, сăмахсене тата тума пулнисене тӳррĕм кĕрешӳн чĕрĕ ĕçĕнче тĕрĕсленĕ çĕрте,—кунта революцин чăн тусĕсемпе тăшманĕсем, рабочисен, хресченсен, салтаксен чăн союзникĕсемпе ултавçисем палăрчĕç.

Тĕрлĕ йышши материалсенчен çав тери тăрăшса тытăнтарнă Вăхăтлăх Правительствă Корнилăв восстанийĕн пирвайхи авăкĕнчех çĕвĕ тăрăх кайат̆.

„Хурланмала“ та факт: „революцийе çăласси“ çинчен паврамала чухне коалици вăй пек курăнса тăрат̆,—революцийе вилĕмлĕ хăрушлăхран чăн-чăнах çăлмала чухне коалици нимĕн те мар пулса тăрат̆.

Кадетсем корнилăвцăсемпе уççăн килĕшсе, министерствăран тухса кайаççĕ. Пур тĕслĕ те пур йышши империалиссем пурте, банкирсемпе фабрикантсем, заводчиксемпе спекулянтсем, помешчиксемпе генералсем, „Новое время“ хаçатри çыру разбойникĕсемпе „Биржевкăри“ хăравçă провокатăрсем,—пурте вĕсем кадетсен партийĕ йертсе пынипе тата Англипе Францин империалисăмлă ушкăнĕсемпе союзла пулса революцийе тата унăн çĕнтерӳвĕсене хирĕç, контр-революционерсемпе пĕр лагĕрте тăраççĕ.

Кадетсемпе тунă союз хресченсене хирĕç помешчиксемпе, рабочисене хирĕç капиталиссемпе, салтаксене хирĕç генералсемпе тунă союз пулни уççăн паллă пулса тăрат̆.

Çакă уççăн паллă пулса тăрат̆: кам Милюковпа килĕшет, вăл çапла тунипе Корниловпа килĕшет, вăл революцийе хирĕç кĕрешмеле, мĕншĕн тесен Милюковпа Корнилов — „иккĕш те пĕрех“.

Çав чăнлăха тĕтрен тăна илни массăлă революцилĕ çĕнĕ йухăмăн никĕсĕнче, вырăс революцин иккĕмĕш хумĕн никĕсĕнче тăрат̆ те ĕнтĕ.

Пĕрремĕш хум кадетсемпе тунă коалици триумфпе пĕтет пулсан (Мускаври совешчани!), иккĕмĕш хум çав коалици персе аннипе, кадетсене хирĕç уççăн пыракан вăрçăпа пуçланат̆.

Çавăнта пĕтĕм тупсăм.

Пĕтсе ларнă пулнă Советсемпе комитетсем генерал-кадетла контр-революцийе хирĕç пыракан кĕрешӳре тылра та фронтра та чĕрĕлсе тĕреклене ççĕ.

Генерал-кадетла контр-революцийе хирĕç пыракан кĕрешӳре рабочисемпе салтаксен, матроссемпе хресченсен, чукун çул çинче ĕçлекенсемпе почтă-телеграф служащисен революцилĕ çĕнĕ комитечĕсем пуçлапа кайаççĕ.

Çав кĕрешӳ вутĕнче вырăнсенче, Мускавра та Кавказра, Питĕрте те Уралра, Одессăра та Харăкăвра, влаçăн çĕнĕ органĕсем пулса пыраççĕ.

Ĕç кунта есерсемпе меншевиксен резолюцийĕсенче мар, вĕсем çак кунсенче сăмах та çук сулахайа сулăнчĕç, ку вăл, паллах, пĕчĕк вырăн йышăнса тăмаст̆.

Ĕç „большевисăм çĕнтерӳвĕнче“ те мар, „Дик“ тата „Воля Народа“ хаçатсенчи хăраса ӳкнĕ филистерсене буржуалă пичет çав большевисăм ĕмĕлкипе хăратса хĕтĕртет.

Ĕç акă мĕнре: кадетсене хирĕç пыракан кĕрешӳре тата вĕсене пăхса тăмасăр çĕнĕ влаç, уçă тытăçура контр-революци отрйачĕсене çĕнтернĕскер, çитĕнсе пырат̆.

Ĕç акă мĕнре: çав влаç, оборонăран нападенийе куçса, пур-пĕрех помешчиксемпе капиталиссен чи çывăх интересĕсене пырса тивет, çапла тунипе хăй тавра рабочисемпе хресченсен йышлă массисене пĕтĕçтерет.

Ĕç акă мĕнре: çапла майпа ĕçлесе тăрса, çав „йышăнман“ влаç условисем хушшипе хăйне „легализацилесси“ çинчен ирĕксĕрех ыйту лартмала, çав хушăрах „официаллă“ влаç, контр-революцилĕ вăрттăн кавар тăвакансемпе куçкĕрет тăванлă пулнине палăртнăскер, ура айĕнчи çирĕп никĕссĕр тăрса йулат̆.

Ĕç, йулашкинчен, акă мĕнре: хуласемпе облаçсене пĕрин хыççăн теприне шутсăр хăвăрт çавăрса илекен çĕнĕ революци хумĕ умĕнче Керенски правительстви, ĕнер-ха контр-революципе татăклăн кĕрешессинчен хăранăскер, пайан ĕнтĕ тылпа фронтра Корниловпа тата корнилăвцăсемпе пĕрлешет, çав вăхăтрах революци вучахĕсене, рабочисен, салтаксен тата хресченсен „хăйирĕкле“ комитечĕсене салатса йама „приказ парат̆“.

Керенски Корниловпа тата Калединпа мĕн чухлĕ ытларах пĕр каварлă пулат̆ ĕнтĕ, массăсемпе правительствă хушшинчи хушăк-сурăк çавăн чухлĕ ытларах сарăлса пырат̆, кадетсен ставленникĕсемпе Советсен хушшинчи çыхăну таталассине çавăн чухлĕ ытларах кĕтме пулат̆.

Уйрăм партисен резолюцийĕсенче мар, çав фактсенче пулат̆ кивĕ соглашательлă лозунгсене вилĕм пригаварĕ.

Кадетсемпе çыхăнува мĕн тери татнине ытлашши хакласран инçе тăратпăр епĕр. Çав çыхăнува татни халлĕхе йачĕшĕн çеç пулнине пĕлетпĕр епĕр. Анчах çыхăнува çавăн пек татни те, пуçламĕш пулса, малала пит пысăк утăм туни пулат̆. Ыттине кадетсем хăйсемех туса çитерĕç, тесе шутлама пулат̆. Вĕсем Демократилĕ Совешчанийе бойкот тăваççĕ ĕнтĕ. Суту-илӳпе промышленноç представителĕсем,—вĕсене Ĕç тăвакан Тĕп Комитетăн чийе стратегĕсем „хăйсен танатине илĕртсе кĕртме“ шутланă,—кадетсен йĕрĕпе кайрĕç. Вĕсем, фабриксемпе заводсене хупса пырса, „демократи“ органĕсене кредит памасăр, ишĕлӳпе выçлăха йурийех сивĕчлетсе, малала кайĕç, тесе шутлама пулат̆. Çав хушăрах „демократи“, ишĕлӳпе тата выçлăхпа кĕрешсе, çав-çавах буржуазийе хирĕç кĕрешессе йерсе пырĕ, кадетсемпе хăй çыхăну татнине тарăнлатса пырĕ...

Çапла пулассипе çапла çыхăну йенчен илсен сентябрĕн 12-мĕшĕнче пухакан Демократилĕ совешчани ăраснах симптомлă пулса тăрат̆. Мĕнпе пĕтĕ совешчани, влаçа „илĕ“-и вăл, Керенски „уступкă тăвĕ“-и,—çаксем пурте халĕ ответ пама май çук ыйтусем. Совешчани пуçаракансем „килĕшӳн“ мĕнле те пулин чийе формине тупма тăрăшасси те пулма пултарĕ. Анчах ĕç, паллах, унта мар. Революцин тĕп ыйтувĕсем, влаç çинчен тăракан ыйту уйрăмăнах та, совешчанисенче мар таталаççĕ. Анчах çакă сăмах та çук паллă,—совешчани йулашки кунсенчи событисен итогне тăвĕ, вăл вăйсем мĕнле тăнине кăтартĕ, вăл вырăс революцин пĕрремĕш, иртсе кайнă, хумĕпе иккĕмĕш, ӳссе пыракан, хумĕ хушшинчи уйрăмлăха уçса палартĕ.

Епĕр ĕнтĕ çаксене пĕлсе илĕпĕр:

Лере, пĕрремĕш хум чухне,—кĕрешӳ царисăма тата унăн йулашкисене хирĕç пынă. Кунта, иккĕмĕш хум чухне,—кĕрешӳ помешчиксене тата капиталиссене хирĕç пырат̆.

Лере—кадетсемпе тунă союз. Кунта—вĕсемпе çыхăну татни.

Лере—большевиксене пĕччене хăварни. Кунта—кадетсене пĕччене хăварни.

Лере—Англипе Франци капиталĕпе тунă союз та вăрçă. Кунта—вĕсемпе çыхăну тытасси патне çитсе пыни те мир, тĕрĕс те пурне те тивĕçлĕ мир.

Совешчани кирек мĕн тусан та, революцин иккĕмĕш хумĕ çапла майпа, çапла майпа кăна ĕнтĕ, кайĕ.

Статйана К. СТАЛИН ал пуснă, „Рабочий Путь“ 6-мĕш №, 1917 çулти сентябĕрĕн 9(22)-мĕшĕ.

Пĕтĕм влаç Советсене!

Революци пырат̆. Ийуљ кунĕсенче пулљă айĕнче пулнăскер тата Мускаври совешчанире „çĕре чикнĕскер“ кивĕ чăрмавсене çĕмĕрсе, çĕнĕ влаç туса, вăл çĕнĕрен пуçне çĕклет. Контр-революци окопĕсен пĕрремĕш ĕретне тытса илнĕ. Корнилов хыççăн Каледин чакса пырат̆. Вилнĕ пулнă советсем кĕрешӳ вутĕнче чĕрĕлеççĕ. Вĕсем руља çĕнĕрен алла илсе, революцилĕ массăсене йертсе пыраççĕ.

Пĕтĕм влаç Советсене—çавăн пек çĕнĕ йухăмăн лозунгĕ.

Çĕнĕ йухăма хирĕç кĕрешме Керенски правительстви тухат̆. Корнилов восстанийĕн пирвайхи кунĕсенчех ĕнтĕ вăл, Корниловщинăна хирĕç кĕрешнине „пуçсăрланни“ вырăнне шутласа, революцилĕ комитетсене салатса йарассипе йунаса хăратрĕ. Унтанпа комитетсене хирĕç кĕрешесси пĕрмай вăйланса пычĕ те йулашки вăхăтра уççăн пыракан вăрçа куçрĕ.

Симферопольри Совет пурте пĕлен Рйабушинскийе, Корниловăн вăрттăн каварĕнче тăнăскере, арĕслет. Керенски правительстви вара çавна хирĕç—„Рйабушинскийе ирĕке кăларма мĕн кирлине тумали çинчен тата ăна саккунсăр арĕслекен çынсене ответ тыттарма кирли çинчен“ („Речь“) распорйажени парат̆.

Ташкентра пĕтĕм влаç Совет аллине куçат̆, çав хушăрах кивĕ влаçсене сирпĕтсе антараççĕ. Керенски правительстви вара çавна хирĕç „чылай ĕçсем тăват̆, çав ĕçсене халлĕхе пытарса усраççĕ, анчах вĕсем Ташкентри Рабочисемпе Салтаксен Депутачĕсен Совечĕн иртĕхсе кайнă дейательĕсене пит те хытă тăна кĕртмеле“ („Русские ведомости“).

Советсем Корниловăн тата унпа пĕрле пулнисен ĕçне тĕплĕн те пур йенчен йĕрлесе тухма хушаççĕ. Керенски правительстви вара çавна хирĕç „Корнилов преступленине пăлхав тесе кăна мар, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнни вырăнне хурса шутлама май паракан хăшпĕр пит те паха документсемпе тата свидетельсемпе усă курмасăр, нумай çынсенчен ыйтмасăр следствийе пĕрсе лартат̆“ (Шубников доклачĕ, „Новая жизнь“).

Советсем буржуазипе, чи малтан кадетсемпе, çыхăну татма хушаççĕ. Керенски правительстви вара çавна хирĕç Кишкинсемпе тата Коноваловсемпе калаçу туса, вĕсене министерствăна чĕнет, правительствă Советсене „пăхăнса тăманни“ çинчен пĕлтерет.

Пĕтĕм влаç империалисăмлă буржуазий—çавăн пек Керенски правительствин лозунгĕ.

Иккеленӳ пулма пултараймаст̆. Пирĕн умра икĕ влаç: Керенскипе ун правительствин влаçĕ, тата Советсемпе комитетсен влаçĕ.

Çав икĕ влаç хушшинчи кĕрешӳ—акă ĕнтĕ пурăнса ирттерекен самантăн тĕп палли.

Йе Керенски правительствин влаçĕ,—вара помешчиксемпе капиталиссем пуç пулса тăрĕç, вăрçăна ишĕлӳ пулĕ.

Йе Советсен влаçĕ,—вара рабочисемпе хресченсем пуçпулса тăрĕç, мир пулĕ те ишĕлӳ пĕтсе ларĕ.

Пурнăç хăй ыйтува çавăн пек, пĕр çавăн пек кăна лартат̆.

Влаçăн кашни кризисĕнче революци çав ыйтува лартнă. Господа соглашательсем кашнинчех тӳррĕм ответ парассинчен пăрăннă, пăрăнса, влаçа тăшман аллине панă. Советсен сиесĕ вырăнне совешчани пухса, соглашательсем влаçа буржуази аллине парса, татах та пăрăнасшăн пулĕç. Анчах вĕсем шутра йăнăшрĕç. Текех пăрăнма май çук вăхăт çитрĕ.

Пурнăç лартнă тӳрĕ ыйту çине уçă та татăклă ответ пани кирлĕ.

Советсемшĕн йе вĕсене хирĕç!

Антив суйлаччăр господа соглашательсем.

И. СТАЛИН.

„Рабочий путь“ 13-мĕш №, 1917 çулти сентябĕрĕн 17(30)-мĕшĕ. Уметайна, ал пуснисĕр тухнă.

Бољшевиксем влаçа илмеле

Р.С.-Д.Р.П. Тĕп Комитетне, Петроградпа Мускав Комитечĕсене йанă çыру

Рабочисемпе Салтаксен Депутачĕсен столицă Совечĕсенче иккĕшĕнче те ытларахăшĕ пулса, бољшевиксем патшалăх влаçне хăйсен аллине илме пултараççĕ, илмеле те.

Пултараççĕ, мĕншĕн тесен икĕ столицăри халăхăн революцилĕ елеменчĕсен активлă ытларахăшĕ массăсене хăйсен хыççăн илсе пыма, тăшман хирĕç тăнине сĕнтерме, тăшмана çĕмĕрсе тăкма, влаçа çĕнтерсе илсе ăна алăра тытса тăма çителĕклĕ. Мĕншĕн тесен, халех демократилĕ мир тума сĕнсе, çĕре халех хресченсене парса, Керенски лутăркаса çĕмĕрсе тăкнă демократилĕ учреждениссене тата ирĕклĕхсене уралантарса, бољшевиксем никам сирпĕтейми правителствă туса хурĕç.

Халăх ытларахăшĕ пирĕн майлă. Майăн 6-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшне тата çентаберĕн 12-мĕшне çити пынă вăрăм та йăвăр çул çавна кăтартса парĕ; столицă Совечĕсенчи ытларахăш вăл халăх пирĕн йенне аталанса пынин результачĕ пулат. Ес-ерсемпе меншевиксен иккĕленўвĕ вĕсен хушшинче интернационалиссем вăйланни те çавнах кăтартса тăрат.

Демократилĕ Совешчани революцилĕ халăх ытларахăшĕн представителĕ мар, соглашателлĕ вакбуржуалă çўлти сийĕсен представителĕ çеç пулса тăрат. Суйлав цифăрĕсемпе хамăра улталама пама йурамаст, ĕç суйлаврă мар: танлаштарса пăхăр Питĕртипе Мускав хула думисен суйлавне Советсен суйлавĕпе. Танлаштарса пăхăр Мускаври суйлава Мускавра августăн 12-мĕшĕнче пулнă стачкăпа: акă ĕнтĕ массăсене йертсе пыракан революцилĕ елементсен ытларахăшĕ çинчен калакан обйективлă материалсем.

Демократилĕ Совешчани хресченсене мир те, çĕр те памасăр, вĕсене улталат.

Бољшевикла правителствă кăна хресченсене кăнăçтарĕ.

* * *

Мĕншĕн бољшевиксем влаçа шăпах халĕ илмеле?

Мĕншĕн тесен ситес вăхăтра Питĕре нимĕççеме пани пирĕн шанчăка çĕр хут йапăхлатĕ.

Керенскипе К° йертсе пыракан çарпа ĕнтĕ Питĕре парассине кансĕрлеме епĕр вăй ситерес çук.

Учредителљĕ Собранийе те „кĕтме" йурамаст, мĕншĕн тесен Керенскипе К° çав Питĕре панипех ăна кирек хăçан та пĕтерсе хума пултараççĕ. Пирĕн парти кăна, влаçа илсе, учредителљĕ Собрани пухассине пурнăçа кĕртме пултарат тата, влаçа илсе, вăл ытти партисене вăхăта тăсnăшăн айăплĕ те тĕрĕс айăпланине кăтартса парĕ.

Англипе нимĕç империалисĕсем пĕр-пĕринпе çепаратлă мир тăвассине хăвăрт çавăрăнкаланипе кăна кансĕрлемеле, кан сĕрлеме пулат те.

Меншевиксемпе ес-ерсен иккĕленўне пула халăх ывăнса çитрĕ. Столицăсенче епĕр çĕнтерни кăна хресченсене пирĕн хыççăн пымала тăвĕ.

* * *

Ыйту восстани „кунĕ" çинчен мар, ăна хăш „самантра" пуçласси çинчен мар пырат. Ăна рабочисемпе тата салтаксемпе, массăсемпе хутшăнса тăракансен пĕтĕм сасси кăна татса парĕ.

Ыйту акă мĕн çинчен пырат: пирĕн партин халĕ Демократилĕ Совешчанире чăннипе хăйĕн сийĕсĕ пур, çав сйес ĕнтĕ революцин кун-çулне татса памала (çавна тăвасшăни вăл йе тăвасшăн мар-и, анчах тумалах).

Ыйту задачăна партишĕн уççăмлă тăвассинче пулат: кун йĕркине Питĕрпе Мускавра (облăçĕпе) хĕçпăшаллă восстани тăвассине, влаçа туртса илессине, правителствăна сирпĕтсе антарассине лартмалă. Пичетре тўрех çапла каламасăр, çавсемшĕн мĕнле агитацилесси çинчен тĕплĕн шухăшласа пăхмала.

Марксăн восстани çинчен каланă сăмахĕсене: „восстани вăл искусствă" текине т. ыт. те аса илмеле, лайăх ăнланса илмеле.

* * *

Бољшевиксен „формаљљĕ" ытларахăш пуласса кĕтни айванла ĕç пулат: пĕр революци те ăна кĕтсе тăмаст. Керенски те К°-пе кĕтсе тăмаççĕ, Питĕре пама хатĕрленеççĕ. Шăпах Демократилĕ Совешчанин мĕскĕн иккĕленўвĕ Питĕрпе Мускаври рабочисен чăтăмне пĕтерсе хурĕ, пĕтерсе хумала та. Влаçа епĕр халĕ илмесен, истори пире каçарас çук.

Аппарат çук? Аппарат пур: Советсемпе демократилĕ организацисем. Тĕнчери лару-тăру шăпах халĕ, англичансемпе нимĕçсем сепаратлă мир тăвас умĕн, пирĕн майлă. Халăхсене шăпах халĕ мир сĕнни—çĕнтерни пулат.

Влаçа Мускавра та, Питĕрте те пĕр трукках илмеле (пуçласса хўт кирек кам пуçлатăр, тен, Мускав та пуçлама пултарĕ), епĕр паллах çăмах та çук çĕнтерĕпĕр.

Н. ЛЕНИН.

1917 ç. çентаберĕн 25—27-мĕшĕнче çырнă.

Толикин ударникăн çемйи

Кашмаш (Тутаркас р.) çынни Толикин Йакурĕ савăнăçлă пурнăç курассине ĕмĕтленмен. Вăл 4 çул хушши айакра Кострома кĕпĕрнинче пăхса пурăннă, анчах темĕн чухлĕ ĕçлесен те вăл хĕл кăçнчен çимелĕх илеймен. Кашмашра 1931 çулта „Ирĕклĕх" колхоз организациленсен, вăл çемйипех колхоза кĕрет. Колхоза кĕрсен кăна çителĕклĕ те савăнăçлă пурнăç пуçланса кайат. Толикин çемйи кашни çулах колхоз ĕçне малти ретре пырат.

Толикин кăçал хăй пĕччĕнех 400 ĕçкунĕ тунă. Йакурăн пиччĕшĕ Зинови кăçал тракторис пулса ĕçлерĕ. Вăл кашни куллен 10—12 гектар сухалат. Çапла майпа куллекки нормăна 150—200 процент тултарса пырат. Зиновин шăллĕ Алексей колхозра паллă коњух шутланат. Унăн лашисем пур вăхăтра та мăнтăр çўреççĕ. Вăл кăçал 4 çамрăк тăва пăхса ўстерчĕ.

Толикинсен амăшĕ 61 çулта пулсан та кăçал 98 ĕçкунĕ тунă. Толикинсен çемйи кăçал чăн-чăн пуйан пурнăçпа пурăнма тытăнат. Колхозра кашни ĕçкунĕ пуçне 8 пар килограм тĕш тыра илесçĕ. Толикинсен çемйи (çемйере 8 çын, ĕçлеме пултаракансем 4) октабер уйăхĕ тĕлне пурĕ 1200 ĕçкунĕ тăват. Çав майпа кăçал вĕсем пурĕ 540 пăт ытла тĕш тыра илеççĕ. Вĕсем кăçал хăйсене кирлĕ йапаласене—патефон, хут купăс тата ыт. те туйанма шутлаççĕ.

М. Исайĕв.

Аслă Совета суйлас умĕн

Йелчĕк райĕçтăвкомĕ суйлава хатĕрленмест

ЙЕЛЧĔК („Чăваш Коммунĕ" корр.) Совет аппарачĕсенче ĕçлекенсем совет саккунне тĕрĕс ĕçлесе, саккун çинчен халăха ăнлантарса паракан, вĕрентекен çынсем пулмалла. Халĕхи тапхăрта уйрăмах çĕнĕ суйлав саккунне çинчен халăха ăнлантарасси пит те ответлă ĕç.

Йелчĕк районĕн центрĕнче ĕçлекенсем суйлав Положени çинчен мĕн чухлĕ тĕрĕс ăнлантарма пултарни, пултарманни çинчен татăклăн калаçа пама çук. Мĕншĕн тесен, райĕçтăвкомăн хăшпĕр пайĕсен пуçлăхĕсем хăйсем те суйлав Положени çинчен пĕлмеççĕ. Апла пулсан халăха суйлав Положенине вĕрентес ĕçе лайăх йĕркеленĕ теме пултараймастпăр.

Кунта тĕслĕхшĕн райĕçтăвкомĕн пайĕсенче ĕçлекенсене илĕпĕр. Финанс пайĕнче унăн пуçлăхĕ Жирнов йулташран пуçласа пĕри те çĕнĕ саккуна тĕплĕн ăнланман. Темĕнле çăмăл ыйтусем парсан та татăклă ответ параймаççĕ. Финанс пайĕн пуçлăхĕ Жирнов йулташ шухăшĕпе, финанс пайĕнче ĕçлекенсем налог шутланипе Положенине вĕренмен пулат. Ăна никам та ĕненме пултараймаст.

Тепĕр тĕслĕх райçутĕçпайĕнче куратпăр. Колхозниксене Положени çинчен ăнлантарса парас йенĕпе сахал мар учителсем ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах учителсем методикăлă пулăшу парса вĕрентес çынсем—Положени çинчен нимĕн те пĕлмеççĕ. Райçутĕçпайĕн инструктăрсем суйлав саккунне хăйсем вĕренменни политикăлă ыйту çине ўрĕккĕн-сўрĕккĕн пăхнине „Политикăлă ĕçрен епĕр уйрăмрах таратпăр" текен шухăшпа чирленине пĕлтерместши вара? Ку çеç мар-ха, çутĕçпайĕнчех хăшпĕр работниксем, сăмахран секретар Григорйĕв, ку тарана çитсе те Положенине вуласа тухайман. Вăл калана тăрăх, унăн „ĕç питĕ нумай", „Вулама вăхăт çук". Ку ĕнтĕ пустуй сăпĕлтетни пулат.

Йелчĕк райĕçтăвкомĕн ытти пайĕсенче ĕçлекенсем те финанс пайĕнче ĕçтешсенчен уйрăлас çук. Сыхлăх пайĕнче ĕçлекенсем Национальноçсен Советне суйламашкăн республика миçе округ пуласси-не те, пирĕн чăваш республикинчи халăхăн миçе бюллетен пуласси-не те пĕлмеççĕ.

Хатĕрлев комитечĕн районри уполномоченнăйĕн аппаратĕнче ĕçлекенсем те çавнашкалах. Кунта вара, мĕнле çынсем суйлава хутшăнма пултарайманни çинчен те калаçа параймаççĕ. Хатĕрлев комитечĕн уполномоченнăйĕн заместителĕ Самсонăв йулташа, мĕнле чухне суйлав çĕнĕрен тăвассĕ, тесе ыйтсан, епĕ кунта „инспектировать не желаю" тесе, хăйĕн работникĕсене ăнлантарса парас вырăнне, пăрăнса çўрет.

Калас пулат, колхозсенче çĕнĕ суйлав Положенине халăха вĕрентес ĕçе лайăхрах йĕркеленĕ. Çав вăхăтрах, совет органĕсенче ĕçлекенсем хушшинче Положенипе палаштарассипе кашни учрежденирех агитатăрсем уйăрнă, анчах вĕсен ĕçĕ халĕ те куранмаст. Асăннă учрежденисем çумĕнчи пуçламĕш организацисем, епĕр агитатăрсем уйăрса çирĕплетнĕ, вĕсем ĕçлеççĕ-ха, тесе лăпланса ларнипе, пысăк йăнăш тăваççĕ.

Кашни коммунис-агитатăр пулмала. Кашни коммунис парти комитечĕ хушмасăр агитаци ĕçне пуçарса пымала. Хăйпе пĕрле ĕçлекен çынсене вĕрентмеле. Пайанхи куна, Йелчĕк районĕнче хăшпĕр пуçламĕш организацисенче уйрăм коммунистсем умра тăракан хăйсен тĕп задачине маннă. Парти комитечĕ „путовкисĕр" партком хушнине те тума ўркенеççĕ.

П. Оçипăв.

Питĕ аван вĕрентет

ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ çумĕнчи аслă пионер вожатăйĕсене хатĕрлекен курсри комсомолĕссем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренме йатарласа кружок организацилерĕç. Кружока, хулари комсомол комитечĕ хушнă тăрăх курсри ССР Сойузĕн историйĕпе вĕрентекен учител — А. В. Никитин йулташ йертсе пырат. Вăл питĕ лайăх, ăнланмала вĕрентет. Малтанах вăл суйлав Положенин уйрăм статйисене вуласа парат. Унтан çав статйа тăрăх ăнлантарат. Вара комсомолĕссен шухăшĕсене ыйтса пĕлет. Комсомолĕссем ăна мĕн ăнланнине каласа пăраççĕ. Йулашкинчен хăйне ыйтусем пама пуçлаççĕ. Вăл чылай ыйтусене Конституци тăрăх та, „Правда" хаçат çине суйлав йĕркисем çинчен çырнă статйасем тăрăх та ăнлантарса парат. Çавна пула 53 комсомолĕсрăн пурте кружока пĕр сиктермесĕр çўреççĕ.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренни-сĕр пуçне, шкулри сторăжсене, кухаркăсене, коњухсене т. ыт. вĕрентме тепĕр кружок организацилерĕç. Ку кружока И. Романăв комсомолĕс йертсе пырат. Унта 13 çын вĕренет. Кружока пĕр сиктермесĕр çўреççĕ. Кружока çамрăксем пекех 83 çулхи Иванов сторăж та питĕ аван çўрет.

Комсомол комитечĕн секретарĕ М. Александров.

2 пин гектар çинче мичуринла сатсем

И. В. Мичурин йачĕпе тăракан аслă лăхпа тĕпчев институчĕ ыйтнипе, Воронĕж облăçĕнчи çĕрĕç управленийĕ облăçри мичуринла сатсене шута илсе тухнă.

Воронĕж облăçĕнче пĕтĕмпе 2 пин гектар çинче мичуринла сатсем ĕрчетеççĕ. Облăçри чи пысăк сат вăл—Избердейĕвск районĕнчи Илйич йачĕпе тăракан колхозăн. Сат плошчĕдĕ 25 гектар. Ку сатра мичуринла суртсем çеç ўсеççĕ. Унта „Пепин шафраннăй", „ылттăн тĕслĕ китайкă", „славйанкă", „Бере-зимняя" т. ыт. улмуççисем пур. Илйич йачĕпе тăракан колхоз кăçал улмуççи сатĕнчен пысăк тупăш илнĕ.

Кам ĕçĕ пултăр ĕнтĕ ку?

ИШЛЕЙ. Вăрман Сўктер йалсоветĕнчи „Париж Коммунĕ" колхоз председателĕ Анисим Йермăнăв халăх тăшманĕсем майлă ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл колхоза шал йенчен аркатса пыма тăрăшат.

Малтанах илсен, колхозниксене аванспа тырă валеçнĕ чухне 90 пăт таса ыраш çине 20 пăт тăпралă тырă кайашне йарса çăнăхăн авăртса парат. Çак çăнăхпа çăкăр пĕçерсе çисен, Васили Морозăв, операци тунăскер, тепĕр хут пăсăлса кайат. Ун пирки колхозниксен пухувĕнче пĕр сасăпа А. Йермăнăва суд аллине пама йышăннă. Ку ĕçе суд халĕ те пăхса тухмаст.

Йермăнăв колхоз уставне пăсса ĕçлет. Петуховпа Моросин колхозниксене, йалан пĕрле ĕçсе çисе пурăннăран, колхозниксен пухăвĕнче килĕшмесĕрех, хăй ирĕкĕпе пахча вырăнĕ парат.

Колхозниксен пухуне 127 çын пымала. Вĕсем 47 çынла пухура 1932 çулта туртса илнĕ Григори Сазонăв кулак пурлăхне кайала памала тунă.

Анисим Йермăнăв сасăсăр хăварнă пулнă çынсемпе çирĕп çыхăну тытат. Вăл вĕсене колхоз пурлăхне „сыхлама" тăратат. Пĕрре çавнашкал çентаберĕн 25-мĕшĕнче Г. Сазонăва колхозра хурал тăма хушат. Тата çавнашкалах Сазонăва пушар насосне урапа çине вырнаçтарса лартма калат. Сазонăв насоса „урапа çине вырнаçтарма" пуçлат. Пушар насосĕн пайĕсене каларса илет.

Çентаберĕн 29-мĕшĕнче, каçхине, А. Йермăнăв колхозра хурал тăма, ĕçлеме пултарайман, суккăртарах 80 çулхи Йефрем Моросина тăратат. Ку каç Кудрйашов колхозник патĕнчен пушар тухат, ăна „колхозри халăх тăшманĕсем чĕртсе йанă.

Пушар патне насос çитсе тăрат. Ĕçлемест. Йалти пушар чанĕ (унăн кантрине туртăнсанах татăлса каймала туса хатĕрленĕ) пĕрре туртсанах татăлса анат. Çакăн пирки çывăракан халăх час сисеймен пирки пĕр туххăмра çурт тата выљăх нимĕн йулми çунса пĕтет.

„Париж Коммунĕ" колхоз чукун-çул строителствинче çителĕксĕр хутшăнса ĕçлерĕ. Плана тултараймаст, районта чи кайра пырат.

Октаберĕн 4-мĕшĕнче колхоз правлени ларăвĕ пулчĕ. Унта Йермăнăв тăшманла агитаци сарчĕ.

Ив. Моççейĕв.

Чурачăк шкулĕнче халăх тăшманĕсем ĕçленĕ

ЙЕПРЕÇ. Чурачăкри туллимар вăтам шкул районра чи начар ĕçлекен шкул. Вĕренў программине 70—80 процентран ытла пурнăçламан. Çавна пула вĕренў пахалăхĕ чакса пынă. Ачасем шкула çўресси те 80—85 процентран ытла пулман. Ачасене тĕрĕс коммунисла воспитани парас, вĕсене социалисăм общчĕствинче ĕçлеме йурăхлă кадрсем туса хатĕрлес вырăнне, халăх тăшманĕсем вĕсене хулиганла т. ыт. ирсĕр ĕçсем тума вĕрентнĕ.

Чурачăк шкулĕнче ĕçсем йапăхса пыни—педагогикăла кадр çирĕп пулманнинчен, шкулта халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла бандă йулашкийĕсем ĕçленинчен килнĕ. Акă, шкул директăрĕ пулса ĕçленĕ П. Ивановах илсе пăхар. Вăл 2—3 çул хушши шкул директăрĕ пулса ĕçлесе, шкул ĕçне йурийех йапăхтарса пынă. Вĕренў пахалăхне партипе правителствă хушнă пек аванлатма тăрăшман.

Иванов шкулта халăх тăшманĕн ĕçне сарса пыма авантарах пултăр тесе, хăй тавра троцкисла-бухаринла ĕççене туса пурăннă учителсене пухнă. Хăй вырăнне шкул директăрĕ пулса ĕçлеме троцкис-бандита Банкова лартса хăварнă. Банков ĕçлеме пуçласан Чурачăк шкулĕн ĕçĕсем пушшех йапăхса пынă. Шкултан вĕренсе тухнисем аслă шкулсене (техникумсене) шкулĕпе те 3—4 ачаран ытла кĕреймен.

Ивановпа Банков ĕçсе-ўсĕрĕлсе, урам хушшинче çапăçса, кăшкăрса асарписеленсе çўренĕ. Вырăс чĕлхипе вĕрентекен Афанасйĕвă учителница, ачасене начар вĕрентнине пытарас шутпа вĕсен тетрачĕсене кăмакана пăрахса çунтарнă.

Çак киревсĕр ĕçсем райçутĕç пайĕн куçĕ умĕнчех пулса пынă. Анчах, райçутĕç пайĕнче Захарăв троцкис ĕçленĕ пирки, Ивановпа Банковăн ирсĕр ĕçĕсене шăлса лартса пынă. Иванова Йавăшри туллимар вăтам шкул директăрĕ туса хунă.

Халăх тăшманĕ Иванов Йавăш шкулĕнче те хăйĕн сăтăрла ĕçĕсене тунă. Шкул тырри-пуллине, укçи-тенкине çаратса, пули-пулми çĕре салатса пурăннă.

Йавăш шкулĕнче Иванов, Орлов троцкиссем контрреволюцилĕ шухăшсем сарнă.

Йулашки вăхăтра Ивановăн троцкисла ĕçĕсене палăртса, ăна комсомол ретĕнчен кăларса çапнă. Анчах вăл пайан кунччен шкул директăрĕнче ларат-ха. Райçутĕç пайĕнче ĕçлекенсем халăх тăшманĕсене уççăнах хўтĕлеççĕ.

Дм. Михайлăв.

Педучилишчăра халăх тăшманĕ ĕçлет

Патăрйелĕнчи педучилишчăра чылайранпах ĕнтĕ „учител" пулса Турхан Ентрийĕ ĕçлет.

Кам вăл, мĕнле çын?

Вăл хăйĕн иртнĕ кунçулĕпе те, халљхи ĕçĕсемпе те—халăх тăшманĕ. Турхан Ентрийĕ ĕлĕк пĕр вăхăтра ес-ерсен партинче тăнă. Граждан вăрçи вăхăтĕнче Турхан Ентрийĕ Çĕпĕрте Колчак çарĕсене тўррĕн пулăшса тăраканĕ пулнă. Кунсăр пуçне, вăл пуп пулса та ĕçленĕ.

Анчах кайрантарах, совет влаçĕ вăй иле пуçласан, Турхан Ентрийĕ кашкăр тирие хывса сурăх тирĕ тăхăнат. Вăл Турхан районĕнчи Аслă Чемен шкулне учителе вырнаçат. Ĕçленĕ май, вăл хăйĕн тăшманла меслечĕсене тарăнлатса, ўстерсе пырат. Вăрттăн шăвăнса пырса, Патăрйелĕнчи педучилишчăна та кĕрсе кайат. Кунта ăна асăрхами пулаççĕ. Тăшман хăйулăнах ĕçлеме тытăнат.

Нумайах та пулмаст вăл Турхан районĕнчи Аслă Чемен шкулне, хăйĕн арăмĕ патне пырат. Кунта вăл шкулти библиотекăран халăх тăшманĕсен кĕнекисене суйласа илет те, вĕсене урăх вырăна хурса, вулама пама ирĕк парат.

Анчах Патăрйел райçутĕçпайĕ халăх тăшманнĕ—Турхан Ентрине—ес-ер, колчаковĕц, пуп пулнăскерне, тем „йăлапа" халĕ те педучилишчăра тытат.

К. Смирнов.

Сўс-кантăр хатĕрлев ĕçне вăйлатмала

Техникăла културăсене хатĕрлес тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай районĕ çултан çула йулса пырат. Сўс-кантăр парса татас тĕлĕшпе ку район кăçал та хăрушлăх умĕнче тăрат. Октаберĕн 1-мĕшне Çĕмĕрле районĕпе Йетĕрне районĕ плана 30 процент тултарнă пулсан, Хĕрлĕ Чутай районĕ 12 процент çеç тултарнă.

Кайа йулса пынăшăн кунта чи малтанах районри организацисем айăплă. Техникăла културăсене парса татма çăмăл пултăр тесе, Заготовкă Комитечĕн республикăри уполномоченнăйĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсене кантăр тыллаласа сўс халĕн парас вырăнне 1400 центнĕр таран тылламан çурăм халĕн пама ирĕк панă. Анчах та, районри организацисем кун çинчен пайан кунччен те колхозсене пĕлтермен.

Сўс кантăр хатĕрлес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе кăçал тата районра сўс хатĕрлекен пункт организациленĕ. Çавах та кунта та йĕркелĕх çук. Йетĕне çав пункта парас вырăнне, Елĕк районĕнчи кантăр савăтне леçтереççĕ. Çавăн пирки 4 колхозран пурĕ 37 лава калле йамала пулнă.

Сўс-кантăр хатĕрлес ĕçе Хĕрлĕ Чутай районĕнче халех йĕркене кĕртсе çитермеле.

Федăрăв.

Т. Василйĕв

Тата тепĕр хут буржуалă националиссем çинчен

Сталин йул. 1918 çулхинех, патша влаçне сирпĕтсе йанипе нацилĕ окраинăсенчи контрреволюцилĕ буржуалă-демократилĕ интеллигенци хăйĕн ĕмĕчĕшĕн усă курма тăрăшни çинчен каланă. Вĕсем влаçа хăйсен аллине илсе, февраљри революцине „хăйсен" нацилĕ патшалăхĕ тума усă курасшăн пулнă. Çак ĕмĕтпе окраинăсенче тĕрлĕрен „нацилĕ советсем", Украинă „Ради", „автономлă правителствăсем", т. ыт. çавăн йышши „пĕтĕм нацилĕ „учрежденисем шăтса тухнă. Вĕсем тавра „нацилĕ буржуази вăй пуçтарнă". (Сталин).

Чăваш буржуалă националисĕсем те çакăн йышши „пĕтĕм нацилĕ" учреждени тунă. Вĕсем февраљри революцин хыççăнах „Чăвашсен нацилĕ ушкăнне" пĕрлешнĕ. Çак ушкăн (общчĕствă) урлă вĕсем рабочисемпе хресченсен депутачĕсен Совечĕсем тăвассине хирĕç кĕрешў пуçласа йанă.

Çак контрреволюцилĕ общчĕствă Октаберти Аслă Революци хыççăн 1917 ç. декабĕр уйăхĕнче, буржуалă Чăваш правителстви—„Аслă Канаш" туса хунă, унта халăхăн чи курайман тăшманĕсем 25 çын кĕнĕ. Вĕсем „нацилĕ буржуазин контрреволюцилĕ шухăшĕсене витсе хума" нацилĕ йалавпа витĕнсе ĕççыннисене улталама тăрăшнă. Вĕсем „хăйсен халăхне" нацилĕ пусмăртан хăтарма, вĕсенчен услам шăйăрса илес ирĕклĕхшĕн, хăйсем пуç пулса тăрасшăн, хăйсен капиталне сыхласа хăварас ирĕклĕхшĕн тăнă.

Çак контрреволюцилĕ ирсĕр ĕç тавра пĕтĕм тăшмансемпе хура вăйсем: Аљунов, Николљски йышши учредиловцăсемпе кадетсем, М. П. Петров, Комиссарăв йышши миссионерсемпе монархиссем, есерсем, Д. Петров, В. Тўмеров йышши тĕрлĕрен лăпкансем пĕрлешнĕ.

Анчах буржуалă националиссем халăха улталама пултараймарĕç, влаçа хăйсен аллине илсе буржуалă правителствă тума аллисем кĕскерех пулчĕç вĕсен.

Контрреволюцилĕ буржуазин шухăшĕсене тăрă шыв çине кăларнă пулин те, чăвашсен нацилĕ общчĕстви хăйĕн ĕçĕсене тума пăрахман, вăл хăйĕн вывĕскине улăштарса, партине хирĕç, совет влаçне хирĕç, Чăваш автономинчи ĕççыннисене хирĕç хăйĕн контрреволюцилĕ ирсĕр ĕçĕсене малала туса пырат. Çигменнине тата çĕнĕрен организациленнĕ Чăваш автономин руководствинче Елмен, Г. Михайлăв тата ытти çавăн йышши буржуалă национаналиссем ларнă пулнă.

Чăвашсен нацилĕ общчĕствин лагерĕнчен йулнă хайар тăшмансем Лукойанăв, Милли, Д. Петров, М. Петров, Тимофейĕв тата ыттисем, ăслăлăх учрежденийĕ йачĕпе „Вырăнти крайа тĕпчесе вĕренекен общчĕствă" организацилеççĕ. Çак общчĕствăн вывĕски айĕнче вĕсем 1921—22—23 çулсенче националисла-буржуалă республикăн платформине майлаштарасçĕ, 1924 çулта вăл платформăна пичетлесе кăлараççĕ.

Çак контрреволюцилĕ ушкăнăн пухувĕ 1921 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнче буржуалă националиссен лидĕрĕн Елменĕн хавхаланчăк сăмахĕпе уçăлнă. Çак „общчĕствăн" малтанхи председателĕ Н. П. Неверăв пулнă, кайрантарах вара—Г. М. Михайлăв.

Çак „общчĕствăн" пĕтĕм ĕçĕ буржуалă националисла ирсĕрлĕхпе, партине, совет влаçне, чăваш ĕççыннисен массисене курайманлăхпа, елекпе тулса ларнă. Вĕсем автономин малашнехи кунçулĕ шанчăксăр, ăнăçсăр текен шухăш сарнă, Чăваш автономинчи ĕççыннисене пурпĕрех пĕтетĕр тесе, совет влаçĕнчен пурпĕрех сивĕнетĕр тесе, йăвăр кунçул суннă, ĕççыннисене совет влаçĕпе хирĕçтерсе йарасшăн сăхăланнă, „пкрĕн кунсем — ишĕлекен пурнăçăн кунĕсем",—тенĕ вĕсем.

Çавăншăн çак „общчĕствă" аслă вырăс халăхĕ çинчен, унăн културиçинчен куç кĕретĕн елекленĕ, Хĕвеланăç Йевропăри фашисла патшалăхсен културине мухтаса, Чăваш халăхне Хĕвеланăç Йевропа йенне туртнă.

Çак мерзавцăсем хĕвеланăç йенне, урăхла каласан, фашисла патшалăхсем йенне туртнă, Совет влаçĕ çинчен елек сарнă, нацисене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе йама тăрăшнă, çапла вара вĕсем Совет Сойузĕнчи халăхсен тăванлă сойузне çĕмĕрме тăрăшнă. Вĕсем Чăваш халăхĕ пĕтсе пырат тесе вĕрентсе, фашиссемпе пĕр фронт тума, сойуз тытма, бољшевиксене хирĕç кĕрешме чĕннĕ.

Çак буржуалă-националисла платформăна Чăваш парторганизацийĕ тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкнă. Анчах буржуалă националиссем пытанса ĕçлеме тытăннă, Йапонипе Германи разведкисен агенчĕсемпе—троцкисла-бухаринла бандăсемпе пĕрлешсе контрреволюцилĕ ĕçсем туса пынă.

„Вырăнти крайа вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен общчĕствăн" 1923 çулти отчотĕнчен епĕр çакна куратпăр: вăл общчĕствăра 1923 çул тĕлне 49 çын пулнă, тата вĕсем çумне çĕнĕрен 16 член хутшăннă. Çĕнĕрен члена кĕнисем хушшинче епĕр çак йатсене тĕл пулатпăр: С. Н. Колбасăв—халăх тăшманĕ, ăна халĕ персе пăрахнă, М. Ф. Спиридонăв—халăх тăшманĕ, М. В.Шевле—провокатăр, В. П. Катрамăв—партирен кăларса çапнăскер.

Халăхăн çак тăшманĕсемпе пĕрлех, çав контрреволюцилĕ националисла организацире Г. М. Михайлăв, А. Н. Никитин, С. А. Коричĕв, А. Йа. Йакăвлĕв, Н. К. Кириллăв, Йе. Ф. Фадейĕв, С. П. Горски, М. Т. Шаготăв, М. В. Данилăв, И. К. Саперăв, М. Йе. Йефимăв, А. И. Йарлыкин, тата ыт. те пулнă. Чăнта, парторганизаци тăшмансен çак спискинчен, хăшпĕрисене тупса палăртса партирен кăларса çапнă ĕнтĕ. Анчах, çав вăхăтрах, пытанса йулнисем те пур-ха. Вĕсене пĕр çын хăвармиччен тупса кăкласа ывăтмала.

Мĕншĕн-ха Г М. Михайлăв хăйĕн ĕçĕсемшĕн ответ тытассинчен пăрăнса тăрат? Мĕншĕн А. Н. Никитин тата А. И. Йакăвлĕв нимĕн те шарламаççĕ, Коричĕв та ун çинчен каламаст? Кама аминисти параççĕ вара Никитин, Коричĕв тата Йакăвлĕв йулташсем? Партийе хирĕç кĕрешнĕ чухне буржуалă националиссем хăйсен сăнне пĕр хут çеç мар улăштарнине, хăйсен сăтăрлă ĕçĕн формисене тата метăчĕсене улăштарса пынине Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем пĕлсе тăраççĕ. Буржуалă националиссем хăйсен вывĕскине нумай хут улăштарнă, анчах вĕсен ăшчиккийĕ çав-савах йулнă, вĕсем контрреволюцилĕ ĕçе массăсем социализмшăн кĕрешнĕ пĕтĕм вăхăт тăрăшшинче туса пынă. Буржуалă националиссем пытанса сăтăрлă ĕç тума йаланах мĕнле те пулин, „наукăлă" учреждени организациленĕ, тĕрлĕрен наукăлă ĕçсем тунă пек пулса тăшманла, контрреволюцилĕ ĕçсем туса пынă. Çавăн пек вĕсем „Чăвашсен нацилĕ общчĕстви" текен, унтан „Военно-окружной комитет" (ВОК) текен, „Вырăнти крайа вĕренмели общчĕствă" текен, „Академи центрĕ" текен т. ыт. те контрреволюцилĕ организацисем тунă пулнă.

Çав контрреволюцилĕ „общчĕствăсемпе", „центрсене" парторганизаци хăй вăхăтĕнче тăрă шыв çине кăларнă. Анчах тăшманла лагерти çынсем нумайĕшĕ йулашки вăхăтченех тĕрлĕ участкăсенче ларнă, сăтăр туса пынă, сăтăрлă ĕç тума организациленмели çĕнĕ формăсем тупса пынă. Çўлте асăннă „общчĕствăсемпе" „центрсем" çумне тата „наукăпа културă совечĕ" текеннине хушма пулат.

Çав хăйне майлă „наукăсен академине", А. Н. Никитин, Г. И. [illegible], Г. И. Иванов, М. С. Йевграфăв та[illegible] С. Сергейĕв йертсе пынипе, 1929 çулхи февралĕн 7-мĕшĕнче туса хунă.

Çак асăннă пйаторкă, халăхăн усал тăшманĕсенчен тăракан организаци валљи хўтлĕх тума, ак çак çынсене чинсем парса тухат тата действителни член йатне парат: Г. И. Иванова, А. М. Михайлăва, М. С. Йевграфăва, Д. П. Петрова (Йумана), К. В. Волкăва, И. В. Лукойанăва, Ф. Т. Тимофейĕва, Т. М. Матвейĕва, Н. И. Ванерккене, И. З. Захарăва Н. В. Шупуççыннине, М. П. Петрова, Н. И. Золотăва, П. И. Иванова тата С. М. Максимăва.

Курăнат ĕнтĕ, çав хăйне майлă „наукăсен академинче" пур вырăнсене те тăшмансем кĕрсе ларнă. А. Н. Никитин мĕншĕн Елмен çемйине пенси парса тăмала тутарнине, Елмен вилсен унăн ўтне пытарассине патшалăх çине илтернине, Љвова, Золотăва тата Иванова—халăхăн тăшманĕсене сывлăха йусама çулленех 1500 тенкĕшер укçа парса тăмала тутарнине—çакесене мĕншĕн тунине халљ ĕнтĕ ăнланмала пулса тăчĕ. Буржуалă националиссемпе тăванланни халљ мар, тахçанах пуçланнă та, йулашки вăхăтченех пулса пынă. Çакă вăл ăнсăртран пулнă теме çук, мĕншĕн тесен — идейăлă çыхăну та, организацилĕ çыхăну та пулнă.

Вĕсенчен татăклă ответ ыйтас пулат.

Китайри вӑрҫӑ

Шанхай фрончӗн нумай участкасенче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Октябӗрӗн 6-мӗшӗнче ҫӗрӗпех Ванзаопански канал урлӑ каҫасшӗн ҫапӑҫнӑ. Пулӑшу пынӑ хыҫҫӑн, йапонцӑсем пӗр тӗлте каналӑн кӑнтӑр йенчи ҫыранне каҫнӑ.

Йапонцӑсен 300 морйакӗ, пит нумай танксемпе, китайцӑсен Чапей районӗнчи (Шанхайӑн ҫурҫӗр йенчи кварталӗ) позицийӗсем ҫине наступлени тунӑ. Китайцӑсем малтан чакнӑ, йапонцӑсен отрйадне малала иртерсе йанӑ, унтан ӑна ик йенчен ҫавӑрса илнӗ. Йапонцӑсем пит хӑвӑрт чакма тытӑннӑ, вӗсен ҫитмӗл ҫын вилсе йулнӑ тата темиҫе пулемет, пит нумай винтовкӑсем пӑрахса хӑварнӑ.

Октябӗрӗн 5-мӗшӗнче Шанхай фронтӗнче Китайӑн тупене перекен артиллерийӗ йапонцӑсен пӗр самољотне персе ӳкернӗ.

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче йапонцӑсем Шанхай районне механизациленӗ ҫӗнӗ отрйад антарнӑ, отрйадра пин ҫына йахӑн, вӗсен танксем, грузовиксем, йӑвӑр артиллери пур.

Йапонцӑсем Шандун провинцине кӗрсе кайнӑ хыҫҫӑн, пӗтӗм Ҫурҫӗр Китайра вӑрҫӑ пырать. Шањси провинцин ҫурҫӗр йенче, тата Бейпин—Хањкоу, Тйанцзин—Пукоу чукунҫулӗсем тӑрӑхӗнче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Йапонирен пӗлтернӗ тӑрӑх, йапонцӑсем октябӗрӗн 5-мӗшӗнче Дачжоу хулине (Шандун провинцин ҫурҫӗр йенчи пайӗнче) туртса илнӗ. Дачжоу районне татах Китай ҫарӗсем пынӑ.

Йапони самољочӗсем октябӗрӗн 5-мӗшӗнче Гуавдун провинцин хӗвеланӑҫ йенчи пайӗнче (Кӑнтӑр Китай) темиҫе хула тата темиҫе йал ҫине тискерле тапӑннӑ. Мирлӗ халӑха 500 ҫын ытла вӗлернӗ. Тата Йапони самољочӗсем Китайӑн Пунхуа йатлӑ паллӑ курорчӗ ҫине (Кантонран 45 километрта) бомбӑсем нумай пӑрахнӑ. Октябӗрӗн 6-мӗшӗнче йапонцӑсен самољочӗсем икӗ хут Нанкин ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

(ТАСС).

Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсем Йапони Китайа вӑрҫӑпа тапӑннине сивлеҫҫӗ

Нйу-Йоркран пӗлтереҫҫӗ:

Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен урӑхҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви октябӗрӗн 6-мӗшӗнче официаллӑ зайавлени пичетлесе кӑларнӑ, ҫав зайавленире Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен правитӗлстви Йапони Китайа вӑрҫӑпа тапӑннине сивлет. Зайавленире — Йапони Китайра тӑвакан ӗҫсем ҫӗршывсем хушшинчи хутшӑну принципӗсемпе (тӗп положенисемпе) ҫураҫулӑ мар, Америкӑри Пӗрлешӳлӗ штатсен правитӗлстви Китай ыйтӑвӗ ҫине мӗнле пӑхни Лигӑ наци пленумӗ ку тӗлӗшпе йышӑннӑ решенисемпе тӗлме тӗлех килет, тесе палӑртсах каланӑ.

Зайавленире тата ҫапла каланӑ: Пӗрлешӳлӗ штатсен правитӗлстви пӗтӗм тӗнчери ыйтусем ҫине мӗнле пӑхнине Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен президенчӗ Рузвељт Чикаго хулинче октябӗрӗн 5-мӗшӗнче каланӑ сӑмахра пӗлтернӗ, — Рузвељт хӑйӗн сӑмахӗнче тӗнче вӑрҫи хӑрушлӑхӗ ҫинчен асӑрхаттарнӑ тата вӑрҫӑ пуҫаракансене хирӗҫ активлӑн тӑма сӗннӗ.

Рузвељт сӑмахӗ Америкӑри общественноҫӑн пур сийӗсенче те пит сисӗнтернӗ. Америкӑри пичет ҫырса пӗлтернисенче Рузвељт вӑрҫӑ пуҫаракансене „карантин“ тума (вӑрҫӑ пуҫаракансен ҫулӗсене пӳлсе лартма) сӗннине уйрӑмах палӑртаҫҫӗ. Ку сӑмаха Рузвељт Йапони, Германи тата Итали пирки каланӑ пулмала, теҫҫӗ. Рузвељт сӑмахӗ — миршӑн тӑракан патшалӑхсене Йапони Китайа вӑрҫӑпа тапӑннине хирӗҫ вирлӗ майсемпе кӗрешме усҫӑнах чӗнни пулать, тесе калаҫҫӗ.

(ТАСС).

Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен урӑхҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин зайавленийӗ ҫине Йапонире мӗнле пӑхаҫҫӗ

Токиоран (Йапони) пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен урӑхҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви октябӗрӗн 6-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ зайавлени Йапони правитӗлствинчи ҫынсене йӑвӑр шухӑша йанӑ. Вӗсем ҫавна кӗтмен пулнӑ мӗн. Рузвељт сӑмах тухса каличчен Йапони правитӗлствинчи ҫынсем — Йапони Китайра тӑвакан ӗҫсене хирӗҫ Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсем активлӑ утӑмсем тумӗҫ-ха, тесе шухӑшланӑ.

(ТАСС).

Китай халӑхӗн Йапони захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешӗвӗ ҫирӗпленсе тата саралса пырать.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Йапонине хирӗҫле ӗҫлекен пропагандис Китайӑн пӗр хулара урамӗнчи митингра тухса калать.

(Сойузфото).

Итали Испанири пӑлхавҫӑсене тата Йапонине пулӑшни

ПАРИЖ 7/X (ТАСС). Еспањ агенствине Итали—Швейцари чиккинчен ҫапла пӗлтернӗ:

Итали Феррарӑра тата Болонхйере (ҫурҫӗр Италири хуласем) икӗ бомбардировӑчнӑй ескадриљйӑ хатӗрлесе ҫитернӗ. Вӑл ескадрилйӑсенчен пӗрине—Испанири пӑлхавҫӑсем валљи, теприне—Китайа, Йапони авиацийӗ ҫумне хушӑнма йама хатӗрленӗ.

Лигӑ наци пленумӗ ӗҫлеме чарӑннӑ

Женевӑран (Швейцари) пӗлтереҫҫӗ: октябӗрӗн пиллӗкӗмӗшӗнче тата улттӑмӗшӗнче Лигӑ наци пленумӗн ларувӗсем пулнӑ. Ку ларусенче „23 членлӑ комитет“ (Лигӑ наци Китай ыйтӑвӗсене пӑхса тухма уйӑрнӑ канашлулӑ комитет) сӗннӗ докладсемпе резољуцисене пӑхса тухнӑ.

Октябӗрӗн 6-мӗшӗнче Лигӑ наци пленумӗ ӗҫлеме чарӑннӑ.

Фашисла пиратсен вӑрӑхурахла ӗҫӗ

Фашисла пиратсем Вӑтаҫӗр тинӗсӗнче халӗ те вӑрӑхурахла ӗҫсем тума чарӑнмаҫҫӗ. Октябӗрӗн 4-мӗшӗнче Аликанте хули ҫывӑхӗнче (Испанин хӗвелтухӑҫӗнчи ҫыранӗ) шыв айӗнче ҫӳрекен „паллӑ мар“ кимӗ „Базилиск“ йатлӑ Англи миноносци ҫине тапӑннӑ, вӑл миноносцӑ Вӑтаҫӗр тинӗсӗ ҫинчи пиратсемпе кӗрешес тӗлӗшпе хурал службинче тӑнӑ. Миноносцӑ ҫине тапӑннӑ вырӑн ҫывӑхӗнче минӑ тупнӑ, вӑл минӑ ҫинчи паллӑсем Итали флотӗнче усӑ куракан минӑсен паллипе пӗр пек.

Хӑйӗн ҫине тапӑннӑ хыҫҫӑнах, „Базелиск“ миноносцӑ шыв айӗнчен ҫӳрекен кимӗ ҫине шыв айӗнчен минӑсем кӑларса йанӑ. Англи пичечӗн сведӗнийӗсем тӑрӑх, кимӗ шыва путнӑ. Шыв айӗнчен йанӑ минӑсем ҫурӑлса кайнӑ хыҫҫӑн миноносцӑ ҫынсен хӑшпӗр йапалисене тупнӑ, вӗсем хушшинче кӗнеке пулнӑ.

(ТАСС).

Лондӑнра фашисӑма хирӗҫ демонстраци тӑвакансем пирки пригӑвӑр йышӑннӑ

ЛОНДӐН, октябӗрӗн 4-мӗш. (ТАСС). Пайан Лондӑнӑн кӑнтӑр районӗнчи сучӗ, фашисӑма хирӗҫ демонстраци тунӑ вӑхӑтра арӗслене ҫынсен ӗҫне пӑхса тухнӑ, ҫав ҫынсем ӗнер фашиссен демонстрацине хирӗҫлесе демонстраци тунӑ пулнӑ. Айӑпланакансенчен нумайӑшне пӗрререн пуҫласа вунӑ фунт стерлинг таран штрафланӑ. Фашисӑма хирӗҫ тунӑ демонстрацине хутшӑннисенчен виҫҫӗшне пӗр уйӑхран пуҫласа ултӑ уйӑх таран тӗрмене хупмала тунӑ.

Германири фашисӑма хирӗҫле йухӑм

ПРАГӐ, октябӗрӗн 5-мӗш (ТАСС). „Дейче фољксцейтунг“ хаҫат Германири рабочисем республикӑлӑ Испанири боецсемпе пӗр шухӑшлӑ пулнӑ чылай фактӑсем ҫинчен ҫырса пӗлтерет. Тури Силезинчи Германин мӗн пур предприйатийӗсенче „Демократилӗ Испани ҫинчен аларсене сирӗр!“ тесе ҫырнӑ листовкӑ салатаҫҫӗ. Листовкӑ автӑрӗсене тата ӑна салатакансене тупас тесе Гестапо тем пек тӑрӑшнӑ пулсан та, вӑл хӑтланнисем ахалех пулнӑ. Тури Силезинче пӗр пысӑк предприйати цехӗнче „Гитлерпа Франко Мадрид патӗнче тӑраҫҫӗ,—епӗр интернационаллӑ бригадӑсен ретӗнче ҫапӑҫатпӑр!“—тесе ҫырнӑ калама ҫук пысӑк транспарант икӗ кун хушши ҫакӑнса тӑнӑ. Муссолини Мӳнхене пынӑ кун хулара пурӑнакансем хула варрине: „Гитлерпа Муссолинин ҫар парачӗсене хирӗҫ, мирӗн пӗрлӗхлӗ фрончӗшӗн!“—тесе ҫырса ҫапнӑ пысӑк плакатсем патне пухӑнса тӑнӑ. „Социалдемократен“ хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Рур облаҫӗнчи чылай пысӑк металлурги предприйатийӗсенче Муссолини Германире ҫӳренӗ кунсенче Республикӑлӑ Испанири хӗрарӑмсемпе ачасене пулӑшма 480 маркӑ укҫа пуҫтарнӑ.

ШАХМАТ

Ейве—Алехин

Тӗнчипе малти вырӑна тухассишӗн пыракан шахмӑт матчӗ

Октябӗрӗн 5 мӗшӗнче Гаагӑ хулинче (Голланди) тӗнчипе малти вырӑна тухасшӑн халњхи тӗнче чемпионӗпе, Голланди гроссмейстерӗпе Ейвепе ӗлӗк тӗнче чемпионӗ пулнӑ (1927—35 ҫ. ҫ.) Алехин хушшинче шахмӑт матчӗ пуҫланнӑ. Вӑтӑр партирен кам ытларах, урӑхла каласан малтан кам 15,5 очко выљаса илет, ҫавӑ ҫӗнтерет. Матч ҫӗнтерӳ никама та пулмала мар пӗтсен (Ейвепе Алехинӑн та 15-шер очко пулсан) тӗнче чемпионӗн йачӗ Ейверех йулать.

Матчӑн октябӗрӗн 5-мӗшӗнче каҫхине пулнӑ партине тепӗр вӑхӑта хӑварнӑ, ӑна октябӗрӗн 6 мӗшӗнче каҫхине выљаса пӗтернӗ. Парти Ейве ҫӗнтернипе пӗтнӗ.

(ТАСС).

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче иккӗмӗш партине выљанӑ. Вӑйлӑн кӗрешнӗ хыҫҫӑн, парти 41-мӗш ходра Алехин ҫӗнтернипе пӗтнӗ.

(ТАСС).

Левенфишпа Ботвинник хушшинчи шахмӑт матчӗ

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче Мускавра Левенфишпа Ботвинник хушшинчи шахмӑт матчӗн иккӗмӗш партийӗ пулса иртнӗ.

42-мӗш ходра партине тепӗр вӑхӑта хӑварнӑ, ку парти Ботвинникшӑн выљаса йанӑ пекех шутланать.

Партине октябӗрӗн 8-мӗшӗнче выљаса пӗтереҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш партине октябӗрӗн 9-мӗшӗнче выљаҫҫӗ.

(ТАСС).

Аслӑ Совета суйлама хатӗрленни

КАЛИНИН, октябӗрӗн 7-мӗш (ТАСС). Калинин хулинче суйлав участкисене ҫӗр ытла тунӑ. Суйлавсем умӗн агитаципе пропагандӑ ӗҫне туса пыма парти хула комитечӗ кашни участкӑ ҫумне йатарласа парторганизатӑр ҫыпӑҫтарнӑ. Парторгсем хӑйсен усасткин территоринче пурӑнакан коммуниссене пурне те шута илсе тухнӑ ӗнтӗ, халӗ малтанхи парти пухувӗсене туса иртерме хатӗрленеҫҫӗ.

СТАЛИНО, октябӗрӗн 7-мӗш (ТАСС). ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленнӗ ҫӗрте йалсенчи парторганизацисене пулӑшма Украинӑри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин Донецк обкомӗ Донбасри хуласемпе промышлӗннӑҫлӑ районсенчен икӗ пин агитатӑр ытла кӑларса йарать. Йалхуҫалӑхлӑ 36 районта колхозсенчи 1200 агитатӑр валљи вунӑ кунлӑх курссем организацилеҫҫӗ.

4 зањати пулса иртрӗ

ЕЛӖК. Ваҫкассинчи Илйич йачӗпе тӑракан колхозра „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне Суйламали Положенине“ вӗренме кружок уҫрӗҫ. Кружокра ку тарана ҫитсе 4 зањати пулса иртрӗ. Вӗренме халлӗхе 35 колхозник йаваҫтарнӑ, ытти колхозниксене те йаваҫтарассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Ив. Маркелӑв.

ТЕАТР

„ДЕТСТВО МАРШАЛА“

Ҫенатбӗрӗн 5-мӗшӗнче Чӑвашсен ача-пӑча театрӗ Всеволожский ҫырнӑ „Детство маршала“ пйесӑна чӑвашла лартса пачӗ. Ку пйеса — пионерсемпе шкул ачисене хамӑрӑн аслӑ ҫулпуҫҫен пурнӑҫӗпе паллаштарас тӗлӗшпе питӗ паха драмӑлӑ произведени пулса тӑрать.

Вӑл пӗчӗк ачасене кӑна мар, ҫитӗннисене те интереслентерет.

Чӑвашсен ача-пӑча театрӗ ҫулпуҫҫенчен пӗрин—граждан вӑрҫинче тӑшмансемпе ҫапӑҫса мухтава тухнӑ, халӗ Совет Сойузӗн маршалӗ пулса тӑракан паттӑр Ҫ. М. Буденный йулташ пурнӑҫӗн пӗр тапхӑрне — ача чухнехи вӑхӑтне лайӑх, чӑнласа кӑтартса паракан пйесӑна лартса парса пионерсене тата шкул ачисене тахҫантанпа кӗтсе пурӑннӑ ӗмӗтне курма май пачӗ.

Чаршав уҫӑлчӗ. Сцена ҫине казаксен ачисем лашала выљаса тухрӗҫ. Малта сиввӗ Ҫемка. Вӑл станицӑри ачасен паттӑр атаманӗ: Залӑра курса ларакан ачасем хавхаланса алӑ ҫупса йачӗҫ.

Ҫемкӑсен килйышӗ питӗ начар пурӑнать. Ашшӗ хулара чирлӗ выртать. Парӑмсем нумай. Станицӑри пуйан казак — старшина Гераҫимӑв Буденный ҫемине канлӗх памасть. Кашни кунах парӑмсене тӳлеменшӗн пырса йатлать, кил-ҫурта сутассипе хӑратать.

Ҫемка амӑшӗ вара аптраса хӑйӗн ҫамрӑк ачине старшина патне тарҫа пама килӗшет.

— Ачам, Ҫемка, есӗ лашасене йурататӑн вӗт-ха, сана Гераҫимӑв старшина лашаҫем пӑхма илесшӗн, кайан пулӗ,— йӑпатать ывӑлне амӑшӗ.

Ҫемка, тахҫантанпах казаксем пек лашала ҫӳреме вӗренесшӗн ҫунаканскер, хӗпӗртет. Анчах унӑн хӗпӗртени вӑхӑтлӑх хавхалану ҫеҫ пулса йулать. Ӑна пуйан казак лаша пӑхма мар, сыснасене пӑхма йарать. Ҫемка капла та килӗшет: мӗнле ӗҫе те пулин ӗҫлесе парӑмсене татмалах.

Кунта Ҫемка нумай пурӑнаймасть. Ҫемка вырӑнне станицӑри ачасен атаманӗ пулма Аполон (пуйан казак ачи) ашшӗн чи йуратнӑ аратлӑ сыснине вӗлерет те, „Ҫемка сыснана ҫапса вӗлерчӗ“ тесе елеклет. Гераҫимӑв Ҫемкӑна хӗнесе ӗҫрен кӑларса йарать. Суд приставне пӗлтерсе, „сыснашӑн“ тата ытти парӑмсемшӗн Ҫемкӑсен мӗн пур кил-ҫуртне суттарать.

Ҫемка вара хуларан килнӗ Коротков рабочипе пӗрле урӑх ҫӗре кайса ӗҫе вырнаҫать. Унта та Ҫемкӑшӑн пурнӑҫ начар. Темӗн чухлӗ патак ҫисе пурӑнать. Йулашкинчен хуларан килнӗ рабочине, унпа пӗрлех Ҫемкӑна та, халӑх хушшинче революцилӗ шухӑшсем сараҫҫӗ тесе, йалти пӗр амбара тытса хупаҫҫӗ. Вӗсене ку тыткӑнтан Ҫемка командинчи ачасем хӑтараҫҫӗ. Ҫемка хӑйӗн командинчен уйӑрӑлнӑ вӑхӑтра ҫапла калать:

— Ачасем, епӗ сире пӑрахса кайнӑшӑн ан кӳренӗр, епӗр татах курнӑҫӑпӑр-ха.

— Епӗр ӗнтӗ атамансӑрах тӑрса йулатпӑри? — ыйтаҫҫӗ ачасем салхулӑн, нӑшӑклатса макӑраҫҫӗ.

Анчах Ҫемка хӑйне ҫирӗп тытать. Ҫав вӑхӑтра вӑл командӑран Фетка йатлӑ ачана чӗнсе илет те:

— Фетка ан макӑр, атамана макӑрни килӗшмест. Есӗ манӑн вырӑна атаман пулса йулатӑн. Йурлӑр, ачасем, леш хуларан килнӗ рабочи вӗрентнӗ йурра,— тесе хавхалантарать.

Ҫакӑнтан пуҫланнӑ Ҫ. М. Буденнӑйӑн организатӑрла пултарулӑхӗ.

Постановкӑра Ҫемка Буденный рољне ҫамрӑк артис Ваҫҫӑ Самуков, Ҫемка амӑшӗн рољне—Р. Иванова актриса, пуйан казак рољне — В. Куҫмин тата пуйан казак хӗрачин рољне Н. Орешникӑва уйрӑмах аван выљарӗҫ. Ҫавӑнпа пӗрлех постановкӑра йакатса ҫитермен вырӑнсем те пур.

Тӑваттӑмӗш картина йармӑркӑра пулса иртет. Кунта декораци вӑйлӑ пулмала ӗнтӗ. Анчах сцена умӗнче Шчукин купцан магазинӗпе пуканесен театрӗсӗр пуҫне урӑх нимӗх те ҫук. Суту- илӳҫӗсем те пӗр карчӑксӑр пуҫне, урӑх курӑнмарӗҫ. Ҫавӑн пекех Ҫемка кӗтӳ кӗтнине кӑтартакан сцена та лайӑхах тухмарӗ. Ҫийелерехӗн туса кӑтартнӑ.

Артиссенчен чылайӗшӗ сцена ҫинче именерех выљани те пӑларать. Ку ҫамрӑк артиссем сцена ҫинче выљама питех хӑнӑхса ҫитейменнинчен килет. Вӑл ача-пӑча театрӗн художествӑлӑ руководителӗпе режиҫҫорӗн ҫамрӑк артиссемпе ытларах ӗҫлеме кирли ҫинчен калать.

Чӑваш республикӗнчи Осоавиахим организацин VI-мӗш сйесӗ

Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче Чӑваш республикӗнчи Осоавиахим организацин VI-мӗш сйесӗ уҫӑлчӗ. Сйес хисеплӗ президиума Сталин йулташа тата ПСК(б)П Политбӳро членӗсене, Тељман, Хозе Диас, Долорес Ибаррури йулташсене суйларӗ.

Сйесӑн малтанхи ларӑвӗнче Чӑваш республикинчи Осоавиахим Тӗп Совечӗн ӗҫӗсем ҫинчен Г. О. Осипӑв йулташ отчот туса пачӗ.

Осоавиахим организацине кӗрсе кайнӑ халӑх тӑшманӗсем, Йапонипе Германи шпионӗсем чылай сӑтӑр тунӑ. Сӑтӑрҫӑсем Осоавиахимӑн пуҫламӗш организацисене салатса йама тӑрӑшнӑ, купи-купипе членран кӑларнӑ, Осоавиахим членӗсене политикӑлла воспитани парассине пӗтерсе лартнӑ.

Тӑшмансем Осоавиахим организацин укҫа-тенкӗ хуҫалӑхне, йурлӑхне, снабжени ӗҫне аркатнӑ. Ворошилӑвла тӗл перекенсене вӗрентсе хатӗрлеме, ПВХО значокне илме нормӑ пама хатӗрлес ӗҫсене пур майсемпе те чӑрмантарнӑ. Осоавиахимӑн вырӑнти организацисем пуҫарнӑ лайӑх ӗҫсене путарса пынӑ.

Чӑваш республикинчи Осоавиахим организацинче те сӑтӑрлӑ ӗҫсем сахал мар пулнӑ. Республикӑри Осоавиахим Тӗп Совечӗнчи тӑшмансем: Йермаков, Љуминарски, Љвов, Читнайӗв, Зефирӑв, йӑла тӗлӗшӗнчен пӑсӑлса кайнӑ Григорйӗв мӗн вӑй ҫитнӗ таран пуҫламӗш организацисене салатса йама тӑрӑшнӑ. Пуҫламӗш организацисенче нумайӑшӗсенче организацилӗ-массӑлӑ ӗҫсене салатса йанӑ. Массӑлӑ оборонӑ ӗҫне, ӗҫсыннисене оборонӑ ӗҫне хутшӑнтарассине пӗтерсе лартнӑ. Самокритикӑна хӗснӗ. Осоавиахим Тӗп Совечӗ укҫа-тењкӗ ҫук тесе Парти Тӗпкомӗн февраљпе мартри пленумӗн решенисене сӳтсе йавма актив пухман. Ҫав вӑхӑтрах йӑпӑлтатас йӑлапа „аслисене“ темиҫе пин тенкӗлӗх премии парса пӗтернӗ. Партипе Совет работникӗсене 44 премии, хаҫат редактӑрӗсене 9 премии, президиум членӗсене 9, аппаратра ӗҫлекенсене 24 премии панӑ. Кӑна Тӗп советри тӑшмансем хӑйсен сӑтӑрлӑ ӗҫне тупса палӑртасран сыхланас майпа тунӑ.

Тӑшмансем районти советсене хӑйсен ҫыннисене лартса тухнӑ. Йелчӗк районӗнчи советра шурӑгвардейца Маркӑва, Ҫӗмӗрлере шурӑгвардейца Илларионӑва лартнӑ. Вӗсем Йермаковсемпе Љуминарскисем пулӑшнипе Осоавиахим организацисене салатас тӗлӗшпе сӑтӑр туса пынӑ. ытти рйонсенче те тӑшмансем, йе пӑсӑлса кайнӑ етемсем хӑйсен сӑтӑрлӑ ӗҫне тунӑ.

Анчах доклад тӑвакан Осипӑв йулташ Осоавиахим организацине хӗсӗнсе кӗнӗ тӑшмансен сӑтӑрлӑ ӗҫсене сйес делегачӗсене тӗплӗн кӑтартса пама пултараймарӗ. Вӑл тахҫанах пуриншӗн те паллӑ фактӑсем ҫинче нумай чарӑнса тӑчӗ. Тӑшмансен сӑтӑрлӑ ӗҫсене кура-тӑркачах вӗсене пӗтерес тӗлӗшпе нимӗн те туман, Осоавиахим Тӗп Совечӗн президиум членӗсене Стеколщичикӑва, Пиктимирӑва докладчик ачашласа ҫеҫ илчӗ. Вӗсен политикӑла тимсӗрлӗхне, хӑйсем (Пиктимирӑв) тӑшмансемпе сыхӑну тытнине те кӑшт ҫеҫ аса илчӗ. Ку вӑл бољшевикла самокритикӑ мар, Ҫавӑн пекех докладчик, Осоавиахим Чӑваш организацинче тӑшмансем тунӑ сӑтӑрла ӗҫсен йулашкине пӗтересси мӗнле пыни ҫинчен те пӗр сӑмах каламарӗ.

Радиофестивалӗн 7-мӗш кунӗ

Шупашкар шкулӗсенчи ачасен художествӑлӑ пултарулӑхӗ пример кӑтартрӗ

Фестивалӗн 7-мӗш кунӗнче микрофон умне чи малтан Кувакинӑ, унтан Пӑрачкав районӗсенчи художествӑлӑ пултарулӑхсем тухрӗҫ. Программӑ йенчен вӗсем хушшинче уйрӑмлӑх сахал: икӗ районӗ те вырӑс халӑх йуррисене ытларах пачӗҫ. Пултарулӑхри маҫтӑрлӑх тӗлӗшӗнчен вара уйрӑмлӑх пурри палӑрчӗ. Пӑрачкав районӗнчи хорсем, пуринчен ытла Семенӑвкӑри колхоз хорӗ („Возле речки“, „Пташечка“, „Рябинушка“ йурӑсене), Сийавӑри колхоз хорӗ („Партизанская“, „Перевоз Дуня держала“, „Как у наших у ворот“ йурӑсене) тата Антипӑври колхоз хорӗ йантравлӑн та кӑмӑллӑн йурларӗҫ. Хорсен ҫак ҫулсенче тухнӑ ҫӗнӗ йурӑсем ҫукпа пӗрех. Вӗсен ҫак ҫитменлӗхе шута илмеле. Ку маҫтӑрлӑхпа вӗсем йӑвӑртарах йурӑсене те начар мар кӑларма пултарасси паллах. Пӑрачкаври педучилишчӑ хорӗ ӑсталӑх тӗлӗшӗнчен колхоз хорӗсенчен кайарах тӑрать теме те пулать. Хор „Рабочий дворец“, „Как кумушка к куме“ йурӑсене тӗрӗс мар йурларӗ. Педучилишчӑ хорӗ репертуар тӗлӗшӗнчен пуйанрах пулмала, тата кунран аванрах йурлама тивӗҫлӗ.

Кувакинӑ районӗнчи пултарулӑхран „Ударник“ колхозри хӗлӗхлӗ оркестӑра палӑртмала (оркестӑра колхозник Жукӑв йертсе пырать). Оркестӑр выљанӑ „Светит месяц“, „Вальс в Степи“ тата „Шур аппа“ йурӑ кӗвӗсем килӗшӳлӗ йанӑрарӗҫ. Кунсӑр пуҫне „Ударник“ колхозри писмоносӗц Николайӗв йулташ „Патша чухнехиҫе халњхи“ ҫинчен хӑй ҫырнӑ сӑвва лайӑх каласа пачӗ. Сӑвӑ шухӑш тӗлӗшӗнчен те начар мар. Кувакинӑри вӑтам шкул хорӗ начар йурларӗ. Хор йурӑ техникине, хавхаланулӑха вӗренсе ҫитеймен, йурӑсен ҫавӑрӑнӑҫулӑхне пӑсса йурлать.

Фестивалӗн 7-мӗш кунӗнче районсем хыҫҫӑн Шупашкар хулинчи шкулсен художествӑлӑ пултарулӑхӗ тухрӗ. Ку выступлени, тӳрех калас пулать, республикӑри ачасен художествӑлӑ коллективӗсемшӗн паха пример пулса тӑрать. Ачасен йурри-сӑввисенче, чӑнах та, пирӗн ҫӗршыври телейлӗ ҫамрӑклӑх, савӑнӑҫлӑх, сталинла йуратулӑх, мухтавлӑ пуласлӑх йантравлӑн илтӗнсе кӑмӑла ҫӗклентерет, хаваслантарать.

Крупскайа йачӗпе хисепленсе тӑракан шкулри октябрйатсен хорӗ (Иванов йертсе пырать, хорта 50 ача) — „У реки, у речки“ „Конармейскайа“ тата „Епӗр пыратпӑр“ йатлӑ Испанин революцилӗ йуррине питӗ тӑрӑшулӑн йурларӗ. Крупскайа шкулӗнчи 65 ачаран тӑракан пионерсен хорӗ те, ҫавӑн пекех, кӑмӑлӑ тухрӗ. Кунта, уйрӑмӑнах, 6-мӗш класра вӗренекен пионеркӑ Нина Стретенскайа икӗ сӑвӑ каланине асӑрхамасӑр хӑварма ҫук Вӑл Высотскайа ҫырнӑ „В Мадриде“ сӑвва тата „Петр Дийков“ йатлӑ сӑвва чӗререн, ҫивӗч туйӑмлӑхпа каласа, хӑй хыҫҫӑн тарӑн шухӑша йама пултарнине кӑтартрӗ.

Шупашкар выступленинчи тепӗр коллектив — Бубнов йачӗпе тӑракан шкулри ачасен хорӗ пулчӗ (хора Куҫмин йулташ йертсе пырать). Хор аван йурларӗ. Жӳри членӗсене ҫак шкулра вӗренекен хӗрача Стешовӑ хӑй ҫырнӑ „Манӑн ӗмӗт“ йатлӑ сӑвва каласа пани ӑраснах килӗшрӗ. Ҫав шкулранах тата Лабас Пушкин ҫырнӑ „Борис Годунов“ трагедирен Борис монолӑгне тарӑн ӑнланулӑхпа вуласа пачӗ.

Шупашкар выступленинче чи йулашкинчен тухнӑ хаҫат шкулӗнче вӗренекен арҫын ачасен хорӗ пирки уйрӑмӑн палӑртмали нимех те ҫук. „Партизанская“ тата „Тихий Дон“ оперӑран илнӗ йурра хор ыттисенчен лайӑхрах йурларӗ, анчах вӗсенче те йуррӑн лирикӑлӑ йантравлӑхне тӗрӗс илеймени, ытларах кӑшкӑрма, хытӑ сас пама тӑрӑшни палӑрчӗ.

Фестивалӗн 7-мӗш кунӗ ӑнӑҫлӑн иртрӗ.

Иакку Арслан.

Пулни иртнисем

Йуҫкасси (Елӗк р.) йармӑркинчен таврӑнакан Иванов колхозника ҫул ҫинче паллӑ мар ҫынсем хӗнесе пӗтернӗ. Ҫав ҫынсемех хыҫҫӑн пыракан икӗ ачана та чулпа персе хӑваланӑ. Ачасем йала тарса кӗнӗ те ҫынсене систернӗ. Кун хыҫҫӑн йалти ҫынсем харӑс пуҫтарӑнса тухса, ҫак хулиганла бандитсене палланӑ. Вӗсем Синер йалӗнчи Золотӑв, Петрикӑв тата Николайӗв пулнӑ.

Золотӑва, Петрикова тата Николайӗва, уй варринче хулиганла ӗҫ тунӑшӑн Уголовнӑй Кодексӑн 74-мӗш статйин 1-мӗш пайӗпе айӑплама суда панӑ.

Ответлӑ редактӑр П. И. ИВАНОВ

Кӑҫалхи октябӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа

Учитӗлсен Институтне вӗренме кӗме хатӗрленмели курссене зайавленисем илме тытӑннӑ

Курса—1938 ҫулта Учитӗлсен Институтӗнче вӗренес текенсене ҫеҫ вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнисене—9 класлӑ курса пӗтӗмӗшпех пӗтернисене тата тӗрлӗрен техникумсенче йулашки ҫула куҫма екзамӗн тытнисене илеҫҫӗ.

Зайавленисене Пединститут директӑрӗ йачӗпе ҫакнашкал документсемпе пӗрле памала: малтан вӗренни ҫинчен, хӑш ҫулта ҫурални ҫинчен, автобиографи, виҫӗ фотокартӑчкӑ тата ҫар службы пирки документ. Паспорта пӗрле илсе пымала.

Вӗренме йышӑннисене 64 тенкӗ стипенди тата кашни уйӑхра вӑтамран 20 тенкӗ хватер укҫи параҫҫӗ.

Курсра вӗренекенсене валљи Институтӑн хӑйӗн общежити ҫук.

Зањатисем октябӗрӗн 10-мӗшӗнче пуҫланаҫҫӗ.

Адрес: Шупашкар, К.-Маркс урамӗ, 65. Пединститут.

ДИРЕКЦИ.

2—2

„Чӑваш Коммунӗ“ ҫырӑнса илмели хаксем: 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 50 пус, 1 уйӑха —2 т. 50 пус. Алҫырӑвӗсене кайала памаҫҫӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 736. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиза. Заказ № 2193. Тираж 11100. ф.58—92 см. п. л.